# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ — 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

42 (9077) № * Эрнекун, 2023 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 27-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Выставка

## Чăваш Ен хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе паллаштарма хатĕрленет

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ çĕршывра пурăнакансене пурне те ВДНХ-ри халăхсем хушшинчи «Россия» выставка-форума çитсе курма чĕннĕ. Визитка-роликра Олег Николаев паллă ентешсем, чăвашсен йăли-йĕрки, регионăн экономика майĕсем пирки каласа парать.**

– Чăваш Ен – çĕр пин юрă, çĕр пин сăмах тата çĕр пин тĕрĕ çĕршывĕ. Нумай ĕмĕр хушши пирĕн халăх Раççей патшалăх аталанăве хăйĕн тӳпине хывать. Эпир Раççей халăхĕсен пысăк çемйин пайĕ пулнишĕн тав тăватпăр тата çакăнпа мухтанатпăр, – палăртнă регион ертӳçи.

Чăваш Ен – виççĕмĕш номерлĕ космонавтăн Андриян Николаевăн, Надежда Павлова балеринăн, карап флочĕн флагманĕсен проектировщикĕн Алексей Крыловăн тата тĕнчери пĕрремĕш арктика самолечĕсен конструкторĕн Николай Базенковăн çĕршывĕ. Паян пирĕн специалистсем чи малта пыракан проектсем валли – Крым энергокĕперĕнчен тытăнса «Арктика» ледокол таранах – электрохăрушсăрлăх тата реле хӳтĕлев системисене туса хатĕрлеççĕ.

Республикăра туса кăларнă хĕвел батарейисене тата хими продукчĕсене, тракторсене тата трикотажа, хăмлана тата канфетсене Раççейре те, аякра унăн тулашĕнче те пĕлеççĕ. Чăваш тĕррин хăйне евĕр йăли-йĕрки «Вышитая карта России» проектра пĕтĕм çĕршыва пĕрлештерме пултарни уйрăмах кăмăллă. «Россия» выставкăра вăл тивĕçлĕ вырăн йышăнĕ.

Аса илтересшĕн, Чăваш Енĕн тата Раççейăн ытти регионĕсен çитĕнĕвĕсемпе «Россия» выставкăра паллашма май пулĕ. Вăл ВДНХ-ра ноябрĕн 4-мĕшĕнче – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕнче уçăлать.

Вырсарникун – Автомобиль тата хула пассажир транспорт ĕçченĕн кунĕ

## Руль умĕнчи яваплăха туять



*Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре куракан Анатолий Замятин – мĕн ачаран автомашина кабининче. Ачалăхра – Муркаш райповĕнче ĕçленĕ ашшĕпе Алексей Андреевичпа, 18 çул тултарсан – хăй руль умĕнче. «Водитель стажне çар службинче усрăм. Çавăнтанпа вара 39 çул пĕр кун сиктермесĕр руль умĕнче», – кăмăллăн калаçать юлашки 6 çулта Муркаш шкулĕнче ачасене автобуспа турттаракан Анатолий Алексеевич.*

*Шаннă ĕçре яваплăха туйăран автобуса та ялан юсавлă, тирпейлĕ тытать, ачасемшĕн – ырă тĕслĕх.*

*Анатолий БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТРАНСПОРТ ОТРАСЛĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Автомобиль тата хула пассажир транспорт ĕçченĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Чăваш Енре паян турттаракансемпе логистика компанийĕсен лайăх аталаннă тытăмĕ йĕркелене çитнĕ, вĕсем республика экономикин мĕнпур секторĕн кулленхи ĕнăçлăхне тата ĕç-хĕлне тивĕçтерсе тăраççĕ.

Кăçал Шупашкар агломерацийĕн интеллектлă транспорт системине тытса пыракан Лару-тăру центрĕ ĕçлеме пуçларĕ, вăл республикăри транспорт сервисĕсене ертсе пырас тата аталантарас ĕçре тĕп сыпăк пулса тăмалла. Çавăн пекех Шупашкар хулин агломерацийĕн пĕрлехи турттару анлăхне туса хурас енĕпе ĕçлетпĕр.

Пассажир транспорчĕн куçса çӳрекен тытăмне палăрмаллах çĕнетсе пыратпăр. Кăçал 21 троллейбус туянма контракт тунă, вĕсем пирĕн пата раштав уйăхĕнче килсе çитмелле. Тепĕр çулхи планра – тата 132 троллейбус туянасси. Транспорт хатĕрĕсен паркне çĕнетсе пынă май троллейбуссен вăтам ӳсĕмĕн шайĕ 4 çулпа танлашĕ. Унсăр пуçне 2024 çулта Чăваш Ен çулĕсем çине пассажирсем турттаракан 47 çĕнĕ автобус рейса тухать.

Автотранспортпа пассажирсене тата тĕрлĕ тиев турттарас ĕç тăван регион аталанăвне пысăк тӳпе хывакан водительсемпе механиксем, диспетчерсемпе ытти специалистсем ырми-канми тăрăшнине пула пĕр самантлăха та чарăнмасть.

Отрасль ветеранĕсене уйрăммăн тав туса хăваратăп. Хăвăрăн паха опытăра çамрăк ăрăва парса эсир Чăваш Ен транспорт комплексĕн ăнăçлă аталанăвĕн çирĕп никĕсне хыватăр.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçусем, хастар кăмăл-туйăм тата тăван республика ырлăхĕшĕн çĕнĕ çитĕнӳсем тума сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**Олег НИКОЛАЕВ.**

Республикăра

## Çăмăллăх вырăнне – укçа тӳлевĕ

**Федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансен çитес çул социаллă услугăсен пуххине илсе тăрассин мелне октябрĕн 1-мĕшĕччен улăштарма май пулнă. Чăваш Енре çак правăпа 6883 çын усă курнă.**

Улшăнусем январĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрессĕ, 2024 çулта тата ун хыççăн та – çăмăллăхпа усă куракан çын асăннă пулăшу мелне илсе тăрассин йĕркине улăштарма йышăну тăвиччен – вăйра пулассĕ.

Федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансен асăннă социаллă услугăсене натурăллă майпа та, çавăн пекех услугăшăн укçан илсе тăма право пур. Чăваш Енре 75177 çын услугăсен пĕр пайне е вĕсене пĕтĕмĕшпех укçан илсе тăма кăмăл тунă.

Санаторипе курорт путевкине тӳлевсĕр тивĕçессине 5502 çын, эмел хатĕрĕсем тӳлевсĕр илсе тăрассине 8182 çын, хула тулашĕнчи чукун çул транспорчĕпе тӳлевсĕр çӳрессине 3067 çын суйласа илнĕ.

Аса илтересшĕн, енчен те çынна инвалидноç пĕрремĕш хут октябрĕн 1-мĕшĕ хыççăн панă пулсан, социаллă услугăсен пуххипе пĕтĕмĕшпех натураллă майпа тивĕçтерме палăртаççĕ. 2025 çултан тытăнса кăна услугăсене илсе тăрассин мелне улăштарма май пулать.

**Ирина ПАВЛОВА,**
**Раççей социаллă фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн пресс-службин ертӳçи.**

Округра

## Пушартан асăрханмалла

***Çулталăк пуçланнăранпа округ территорийĕнче 51 пушар пулнă, вĕсенче 5 çын вилнĕ тата 4-ăн суранланнă. Кун пирки Муркаш муниципалитет округĕн чрезвычайлă лару-тăрăва пĕтерессипе тата пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерессипе ĕçлекен комиссин черетсĕр ларăвĕнче надзор тата профилактика ĕçĕ-хĕлĕн аслă инспекторĕ Антон Краснов пĕлтернĕ. Ларăва округ администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Андрей Мясников ирттернĕ.***

Ларура Мăн Сĕнтĕр, Турай, Юнкă, Ярапайкасси территори пайĕсен пуçлăхĕсем Наталья Мареева, Евгений Орлов, Сергей Самуков, Олимпиада Веселова хăйсем патĕнче пушартан сыхланассипе туса ирттерекен ĕçсем çинчен каласа кăтартнă.

Кунпа пĕрлех ларура Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн пуçлăхĕ Юрий Варюхин округри ирĕклĕ пушар дружинисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă. Вăл асăннă тăрăх, çак вăхăта ирĕклĕ пушар дружинисем 11 тата ирĕклĕ пушар командисем 4 йĕркеленĕ.

Ларура çавăн пекех командăпа штаб вĕренĕвĕн ĕçне пĕтĕмлетнĕ, сӳтсе явнă ыйтусемпе тивĕçлĕ йышăнусем тунă.

**Хамăр инф.**

Республикăра

## «Сеспель» предприяти 35 çул тултарчĕ

Пирĕн округри «Сеспель» предприяти ĕнер йĕркеленнĕренпе 35 çул çитнине паллă турĕ. Предприятие паян хамăр çĕршывра кăна мар, çавăн пекех чикĕлеш енче те пĕлеççĕ. Хальхи çĕнĕ оборудованипе тивĕçтернĕ предприятире халĕ цемент, çăнăх-кĕрпе, нефть тата хими продукчĕсем, битум, шыв, комбикорм, газ турттармалли автоцистернăсемпе танк-контейнерсем туса кăлараççĕ. «Сеспельте» çак вăхăта 700 çынна яхăн вăй хурать. Вăл шутран пысăк квалификациллĕ сварщиксем – 100 çын ытла. Ĕçе икĕ сменăпа йĕркеленĕ. Хатĕрлев участокĕнче вара – татти-сыпписĕр производство. Кунти ĕçсене 4 сменăпа ятарлă графикпа йĕркелесе пыраççĕ.

Предприятире тĕнче шайĕнчи çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртсе пырасси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Паянхи куна «Сеспель» – Раççейре алюмини ирĕлчĕкĕсене сĕртĕнсе-хутăштарса сварка тумалли çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртнĕ пĕртен-пĕр предприяти. Çавăн пекех агрессивлă хими шĕвекĕсем валли цистернăсем туса кăларма Ростехнадзор аккредитацине тивĕçнĕ предприятисем те Раççейре «Сеспельсĕр» пуçне урăх çук. Асăннă предприяти продукцийĕпе паян транспорт, строительство, ял хуçалăх, нефтьпе газ комплексĕн сферисенче, хими, апат-çимĕç тата продукци тирпейлекен промышленноçра анлă усă кураççĕ.

«Сеспель» Чул хула облаçĕнчи Линда юхан шывĕ урлă хывнă 70 метр тăршшĕ алюмини кĕпер сооружение те сварка туса сыпăнтарнă. Кун пек çăмăл тимĕртен тунă кĕпер сооруженийĕ урăх Хĕвел тухăç Европăра та çук. 42 миллиметр хулăнăш алюмини хутăшне сварка тумалли технологие «Сеспельте» туса хатĕрленĕ.

«Сеспеле» пула Чăваш Ен хăйĕн ятне Раççей космонавтикин историне çырса хума пултарчĕ. Шăпах ĕнтĕ кунти специалистсем туса хатĕрленĕ алюмини ирĕлчĕкĕсене сĕртĕнсе-хутăштарса сыпăнтармалли сварка комплексĕпе «Союз-5» ракетоносителĕн бак конструкцийĕсене сварка тума усă кураççĕ.

Тăрăшуллă коллектива хăйĕн телеграм-каналĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев саламланă, пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, малашне те професси ӳсĕмĕсем тата аталану суннă.

Наци проекчĕ

# Çурт-йĕр çĕклеççĕ, хваттер туянаççĕ

ЖИЛЬЕ И ГОРОДСКАЯ СРЕДА
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

***Социаллă хÿтлĕхе тивĕçлисене патшалăх нихăçан та пулăшусăр хăвармасть. Уйрăмах вара хальхи вăхăтра çакă çынсене хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕсене татса пама пулăшассипе пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Кун пеккисен категорине чи малтанах ялта ĕçлесе пурăнакансене, çамрăк çемьесене, нумай ачаллисене, тăлăх ачасене кĕртес пулать. Социаллă хÿтлĕхе тивĕçлисене хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвне татса пама пулăшассипе «Пурăнмалли çурт-йĕр тата хула тăрăхĕ» наци проекчĕ шайĕнче федераци тата республика программисемпе проекчĕсем пурнăçа кĕреççĕ. Пирĕн округра та çак пулăшу мелĕсемпе усă курса сахал мар çемье харпăр хăйĕн çурт-йĕрне çĕклет, хваттер туянать, хăтлăрах условисенче пурăнма тытăнать.***

***Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн территорисене хăт кĕртессин тата аталантарассин управленийĕн пуçлăхĕн çумĕпе – строительство, çулйĕр хуçалăх тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕн пуçлăхĕпе Ольга САНДИМИРОВĂПА тĕл пулнă май, шăпах ĕнтĕ наци проекчĕ шайĕнчи тĕрлĕ программăсене хутшăнса хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатакансем пирки сăмах пуçартăм.***

**– Паллă ĕнтĕ, хальхи вăхăтра çемьесене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма патшалăх тивĕçтерекен пулăшу мелĕ те сахалах мар, сумми те самай. Ольга Владимировна, пирĕн округри çемьесем ытларах мĕнле программăсене хутшăнса хăйсен çурт-йĕр ыйтăвĕсене татса параççĕ?**

– Малтанах «Обеспечение доступным и комфортным жильем и коммунальными услугами граждан Российской Федерации» патшалăх программине асăнса хăвармалла пулĕ. Асăннă программăпа пĕлтĕр те çуртйĕр çавăрма е туянма пирĕн округри 32 çамрăк çемье социаллă тÿлев укçи-тенкине тивĕçме пултарнăччĕ.

Кăçал вара октябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне патшалăхăн асăннă пулăшăвне тивĕçекен çамрăк çемьесен шучĕ 21 пулчĕ. Вĕсене пулăшу укçи-тенки 15 млн та 498 пин тенкĕ уйăрса панă. Çакă планпа пăхса хуни шайĕнче.

Кунсăр пуçне тата «Комплексное развитие сельских территорий» патшалăх программи те вăйрах. Асăннă программăна 2019 çулта çирĕплетнĕ. Унпа килĕшÿллĕн ял территорийĕнче ĕçлесе пурăнакан граждансене çурт-йĕр тума е туянма пулăшупа тивĕçтереççĕ. Кăçал валли уйăрнă сумма 1 млн та 137 пин тенкĕпе танлашать. Çакă пĕр гражданин валли. Укçа-тенке социаллă тÿлев илекенĕн вăхăтлăх счечĕ çине куçарса панă ĕнтĕ.

**– Социаллă хÿтлĕхе тивĕçлисем – тăлăх тата ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕр юлнă ачасем пирки мĕн калама пултаратăр? Вĕсем те пурăнмалли çурт-йĕрлĕ пулма патшалăх пулăшăвĕсĕр юлмаççĕ вĕт-ха?**

– Кун пеккисем патшалăх енчен те пысăк тимлĕхре, кунпа пĕрлех округ администрацийĕ енчен те вĕсем тĕлĕшпе пысăк тимлĕх уйăрма тăрăшатпăр.



«Çемьесене пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас енĕпе патшалăх пулăшасси малалла та йĕркеллĕн пурнăçланса пырĕ, кăçал 2 пинрен кая мар çемье пулăшу илĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче эпир çичĕ, сакăр тата унтан та ытларах ачаллă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе туллин тивĕçтернине палăртса хăвармалла. Çав тĕллевсем валли Чăваш Ен Правительствине 2021– 2022 çулсенче тухăçлă ĕçленĕшĕн паракан федераци гранчĕсен укçин пĕр пайне янă. 2023 çулхи тĕллев – 315 тăлăх ача, пиллĕк тата унтан та ытларах ачаллă 65-рен кая мар çемье.

Юлашки икĕ çулти ĕç йĕрки тăлăхсене тата нумай ачаллă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕр туянма çурт-йĕр сертификатне уйăрса пани тухăçлă пулнине кăтартса пачĕ. Пĕлтĕр вĕсемпе 64 тăлăх ача тата нумай ачаллă 57 çемье усă курнă».

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев республика Патшалăх Канашне 2023 çул валли янă Çыруран.**

Асăннă категорие кĕрекенсем валли пурăнмалли çурт-йĕр туянса пама 2023 çулта пĕтĕмпе 27 млн та 649 пин тенкĕ ытла уйăрма палăртнă пулнă. Вăл шутран пурăнмалли ятарлă çурт-йĕр фончĕн хваттерĕсене найм килĕшĕвĕпе уйăрса пама 19 млн та 805 пин тенкĕ ытла тата сертификатсемпе тивĕçтерме 7 млн та 843 пин тенкĕ ытларах.

Çак вăхăта палăртнă суммăлăх виçĕ сертификат уйăрса панă ĕнтĕ. Ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕррисем иккĕн хăтлă хваттер туяннă, тепри те çывăх вăхăтрах туянма палăртать.

**– Юлашки çулсенче республикăра йышлă ачаллă çемьесен шучĕ ÿссе пынине палăртаççĕ. Çакă кун пек çемьесем енĕпе пулăшу тата тимлĕх мелĕсем сахалах мар ĕçе кĕртнипе те çыхăннах ĕнтĕ. Вăл шутрах – çемьесен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене татса пама пулăшнипе те. Пирĕн округри нумай ачаллă çемьесем хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕсене мĕнлерех татса параççĕ-ха?**

– Çемьере çул çитмен ачасем пиллĕк е ытларах пулсан, çемье пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмаллисен черетĕнче тăрать пулсан, кун пеккисене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерме пăхнă. Кăçал Муркаш округĕн территорийĕнчи çакăн пек виçĕ çемьене патшалăх пулăшăвĕпе усă курса хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма май туса пама палăртнă. Вĕсем валли уйăрнă сумма 13 млн та 653 пин тенкĕ ытларах.

Çак вăхăта икĕ çемье пĕтĕмĕшле 9 млн та 505 пин тенкĕлĕх сертификатсене тивĕçрĕ ĕнтĕ. В. Вениаминова çемйи 6 млн та 83 пин тенкĕ, Е. Соколова çемйи 3 млн та 422 пин тенкĕ илнĕ. Е. Соколова çемйи сертификат укçи-тенкипе усă курса хăтлă икĕ хваттер туянчĕ. В. Вениаминова çемйи те çак вăхăта хăтлă хваттер хуçи пулса тăчĕ.

Йышлă ачаллă татах тепĕр çемье харпăр хăйĕн уйрăм çуртне çĕклеме кăмăл турĕ. Ку çемье патшалăхран 4 млн та 148 пин тенке тивĕç пулчĕ. Подрядчик ĕçе тытăннă ĕнтĕ, çĕр участокĕн аренда килĕшĕвне тунă. Петровсен çемйи патшалăх пулăшăвĕпе усă курса каркаслă пурăнмалли çурт çĕклет.

Пĕр сăмахпа калас пулсан, çемьесен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе пăхса хунă программăсене Муркаш округĕ активлă хутшăнать. Вĕсене хутшăнса хăйсен çурт-йĕр ыйтăвĕсене татса паракансем округра çитес çулсенче те сахал мар пулĕç.

**Владислав ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Наци проекчĕ

# Предпринимательсем Муркаша илемлетме хутшăнаççĕ



Муркаш муниципалитет округĕнчи пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталанăвĕпе ĕçлекен канаш çак эрнере хăйĕн анлă ларăвне пуçтарăнчĕ. Предпринимательство аталанăвĕн ыйтăвĕсене тишкернипе пĕрлех бизнес çыннисем ларура Муркашри хăт тата тирпей-илем ыйтăвĕ çинче те чарăнса тăчĕç.

Çитес çул Муркашри «Сывлăх» спорт шкулĕ хыçĕнчи лаптăка, пĕве таврашне тирпейлесе хăт кĕртме палăртнă. Çак ĕçе «Пурăнмалли çурт-йĕр тата хула таврашĕ» наци проекчĕн «Хăтлă хула таврашне йĕркелесси» федераци проекчĕ шайĕнче пурнăçлама палăртнă. Муркашри тĕп вырăна (парк, спорт шкулĕ умĕнчи тата хыçĕнчи лаптăк) хăт кĕртессишĕн сасăланине муркашсем астăваççĕ пулĕ.

Муниципалитет округ администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕн тивĕçне пурнăçлакан Андрей Мясников «Сывлăх» спорт шкулĕ хыçĕнчи лаптăка хăт кĕртме наци проекчĕ шайĕнче 7,5 млн тенкĕ уйăрма пăхнине пĕлтерчĕ. Çак суммăн пысăк пайĕ – 99 проценчĕ федераци бюджетĕнчен куçмалла.

Муркаш территори пайĕн пуçлăхĕ Алексей Кириллов палăртнă ĕçе пурнăçлассипе çыхăннă тепĕр ыйту тухса тăнине каларĕ: пĕве таврашне хăт кĕртиччен пĕвене тасатмалла. Çав вырăнта уçăлса çÿремелли çулсем, амфитеатр, сцена тата ытти те пулмалла. Çитменнине тирпей-илемпе хăт кĕртес ĕçсен шутĕнче свайсем çапасси те пур, пĕве çинчи фонтана çĕнтесси те. Апла таса мар шывлă пĕве пĕтĕм ÿкерчĕке «варалать». Çавăнпа та территорире хăтлăх ĕçĕсене пурнăçличчен çак пĕвене тасатни питĕ вырăнлă пулмаллине палăртрĕ Алексей Кириллов.

Ыйтăва вара хăвăрт пурнăçлама пуçарулăх бюджечĕ кăна май парĕ. Çакна палăртнă май, муниципалитет округ администрацийĕн экономика пайĕн ертÿçи Ольга Тимофеева ку ĕçе пурнăçламалли суммăн пĕр пайне вырăнти предпринимательсем, организацисем укçа хывни пĕлтерĕшлине каларĕ. Çапла чухне проект конкурса хутшăнмалли критерисене çÿллĕ шайра тивĕçтерейрет, апла пулсан ăна çулталăк пуçламăшĕнчех пурнăçа кĕртме май пулĕ. Сăмах май, пĕвене тасатма пурĕ 2 млн та 800 пин тенкĕ таран кирли паллă.

Ларăва пухăннă предпринимательсем «Сывлăх» хыçĕнчи территорие хăт кĕртессипе хăйсен сĕнĕвĕсене те пачĕç. Пĕве тасатма хутшăнма кăмăл пуррине палăртрĕç.

Муркашри тĕп вырăнти лаптăка канма ытти ялсенчен те килекенсем пулаççех тесе шутлать предпринимательсен канашĕн ертÿçи Геннадий Михайлов. Çавăнпа та вăл çак ĕçе муркашсем кăна мар, ыттисем те хутшăнасса шанса каларĕ.

Округ депутачĕсен Пухăвĕн «Единая Россия» фракцине ертсе пыракан Александр Давыдов депутат та кунпа килĕшрĕ. «Харпăр хăй хутшăнса пурнăçланă ĕçе çын ытларах хаклать, апла пулсан типтерлĕрех упрама тăрăшать», – палăртрĕ вăл.

Муркашри тепĕр вырăна та, «Сказка» кафе умĕнчи территорие, тирпейлесе хăт кĕртме палăртнă. Кунта автомашина лартмалли вырăн йĕркелес ĕçе те предпринимательсем хутшăнма хатĕррине пĕлтерчĕç. Ĕçе пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе туса ирттересшĕн.

Ларура пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталанăвĕ çинче чарăнса тăнă май, Ольга Тимофеева продукци çаврăнăшĕ, пĕлтĕрхи тăхăр уйăхрипе танлаштарсан, 17 процент ÿснине палăртрĕ. Муниципалитетри 59 субъект патшалăх пулăшăвне çак тапхăрта пурĕ 23,76 млн тенкĕлĕх тивĕçнĕ.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Гараж амнистийĕ

# Çĕнĕлĕхсем татах вăя кĕчĕç

2023 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче федерацин 2023 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнчи «О гаражных объединениях и о внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации» Саккунĕ вăя кĕчĕ. Çĕнĕлĕхсемпе çыхăннă уйрăм самантсене палăртса хăварасшăн.

«Гараж пĕлтерĕшлĕ территори», «гараж комплексĕ» тата «гараж» ăнлавсем туса хунă. Саккунпа гараж харпăрçисен пĕрлехи пурлăх харпăрлăхĕнчи пайĕ пирки калакан положение çирĕплетнĕ.

Çапла вара гараж тата машина вырăнĕн харпăрçисен пĕрлехи пурлăхпа усă курассин йĕркине палăртнă.

Уйрăммăн илес пулсан, гараж пĕлтерĕшлĕ территорин пурте усă куракан территорийĕ шутне тухса çÿремелли, котельнăй территорийĕсем, техника площадкисем, йăлари çÿп-çапа пухмалли контейнер площадкисем кĕреççĕ.

Гараж комплексĕн пĕрлехи пурлăхĕ шутĕнче çуртăн техника пÿлĕмĕсем, мачча çийĕ, подвал, картлашка площадкисем, лифтсем, коридорсем шутланаççĕ.

«Гараж амнистийĕн» механизмĕпе усă курассин практикине шута илнĕ май, саккуна темиçе норма кĕртнĕ. Вĕсен шутĕнчех территорин кадастр планĕнче çĕр участокĕ вырнаçнин схемине хатĕрлессин майне те (территорин чикĕлев проектне çирĕплетнĕ пулсан).

Енчен те гаража патшалăх кадастр учетне тăратнă пулсан, унăн техника планне малашне хатĕрлемелле пулмасть.

Чукун çулсем çывăхĕнчи территорири çĕр участокĕсен тата гаражсен харпăрлăх правине çирĕплетессин йĕркине тÿрлетÿсем кĕртнĕ.

Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, «гараж амнистийĕ» вăя кĕнĕренпе республикăра гаражсем вырнаçнă 2787 çĕр участокĕн тата 735 гаражăн харпăрлăх правине регистрациленĕ.

**Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕн пресс-службы.**

Наци проекчĕ

# Иртнине пĕлмесĕр малашлăх çук

ОБРАЗОВАНИЕ
НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

Вĕренӳ наци проекчĕ шайĕнче Муркаш муниципалитет округĕн вĕренӳ тытăмĕ регион шайĕнчи ултă проекта пурнăçласа пырать. Вĕсен шутĕнче: «Хальхи вăхăтри шкул», «Кашни ачан ăнăçлăхĕ», «Цифра вĕренӳ анлăшĕ», «Раççей Федерацийĕн гражданĕсен патриотла воспитанийĕ», «Социаллă активлăх».

Муркаш муниципалитет округĕнче çак проектсемпе пăхса хунă мероприятисем «Вĕренӳ аталанăвĕ» муниципалитет программипе шайлашăнса пыраççĕ.

Патриотла воспитани çине юлашки вăхăтра уйрăмах тимлĕ пăхма пуçларĕç. 2021 çултанпа Раççейре «Вĕренӳ» наци проекчĕ шайĕнче «Раççей Федерацийĕн гражданĕсен патриотла воспитанийĕ» Федераци проектне пурнăçлама тытăннипе те çыхăннă çакă.

Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Зоя Дипломатова каласа панă тăрăх, 2021 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен муниципалитетри пур вĕренӳ организацийĕнче те воспитани программине тата воспитани ĕçĕн календарлă планне çирĕплетнĕ, вĕсене пурнăçласа пыма тытăннă. Воспитани программисене епле пурнăçланине кашни кварталтах сӳтсе яваççĕ, контрольте тытаççĕ.

«Çулсеренех пирĕн шкулсенчи çамрăксем çарпа спортăн хушма тĕсĕсен енĕпе спартакиадăна хутшăнаççĕ. 10 класра вĕренекен яшсем çулсеренех май уйăхĕнче пилĕк куна пыракан ятарлă вĕренĕве хутшăнаççĕ. Çамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» çарпа патриот вăййисене, январь-февраль уйăхĕсенче кашни вĕренӳ организацийĕнче оборонăпа массăллă тата спортпа патриот уйăхлăхне ирттеретпĕр. Пирĕн муниципалитетра спорт ăмăртăвĕсене çĕршыв историйĕнчи паллă событисене халалласа ирттересси те ырă йăлара. Кашни мероприяти ачасемпе çамрăксенче патриот туйăмне аталантартăр, тăван кĕтесе тата çĕршыва юратма та хаклама вĕрентĕр, çав вăхăтрах вĕсен кăмăлĕпе ӳт-пĕвне те çирĕплеттĕр тесе тăрăшатпăр», – палăртать Зоя Дипломатова.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине асра тытма çулсеренех тĕрлĕ акци йĕркелеççĕ: «Астăвăм вахти», «Астăвăм çурти», «Çĕнтерӳ сиренĕ», «Çĕнтерӳ вальсĕ», «Вилĕмсĕр полк» тата ытти те.

2019 çултанпа пирĕн шкулсем «Паттăр партти» федераци проектне хутшăнма тытăнчĕç. Шкулсенче пурĕ 13 парта «уçнă», вăл шутра ятарлă çар операцине хутшăнса пуç хунисен ячĕпе те. Вĕсем çинченех шкулсенче ятарлă стендсем те туса хатĕрленĕ, хăш-пĕр шкулта Асăну хăми те уçнă.

Çар вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренекенсем, ятарлă çар операцине хутшăнакансем шкулсене çитсе патриотизм темипе калаçусем йĕркелени те ачасемпе çамрăксен патриотла аталанăвĕ çине пысăк витĕм кӳрет. Хальхи вăхăтра шкул ачисем салтаксем патне гуманитари пулăшăвĕ парас ĕçе те активлă хутшăнаççĕ.

Шкулсенче ачасене патриотла воспитани парассипе ОБЖ предметне вĕрентекенсем, директорăн вĕренӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ тата советниксем тимлеççĕ. Класс ертӳçисем те класс сехечĕсенче ку темăна нихăçан та айккинче хăвармаççĕ. Педагогсем пулăшнипе, хавхалантарнипе ачасен çитĕнĕвĕсем те курăмлă.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**



**Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Путин:**

**«Харпăр хăйĕн историне, Тăван çĕршывăн патриот, кăмăл-сипет, культура эткерлĕхне типтерлĕ тата хисеплесе упрани тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тума май парать».**

Ятарлă çар операцийĕ

# «Сетка çыхса та пулин пулăшас»






Муркаш тăрăхĕнче пурăнакансем ятарлă çар операцине хутшăнакан салтаксене май пур таран пулăшма тăрăшаççĕ. Вăй çитнĕ чухлĕ тĕрлĕ енлĕ пулăшупа тивĕçтереççĕ. Çак ĕçе шкул ачисем те, аслисем те хутшăнаççĕ.

Нумаях пулмасть Чуманкасси шкулĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекенĕсем салтаксем валли пухнă ăшă чăлха-нускисене Мускаври госпитальтен ыйтнипе унта çитертĕмĕр **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре).** Вĕсем гигиена хатĕрĕсем, чей, кофе тата ыттине те пухнă. Ку япаласемпе продуктсем ятарлă çар операцийĕ пынă вырăна пирĕн ентешсем тăракан çар чаçне çитрĕç. Салтаксен тав сăмахне ачасемпе вĕрентекенсем «Моргаушцы – за победу!» телеграм-чатра курма ĕлкĕрчĕç пулĕ.

Ял çыннисем вара, аслă ӳсĕмрисем, ытларах тивĕçлĕ канурисем маскировка сеткисем çыхассипе тимлеççĕ. Мăн Сĕнтĕр, Чуманкасси, Турай, Ярапайкасси **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре),** Çатракасси, Юнкă территори пайĕсенче çак ĕç чарăнмасть. Сетка çыхма ял çыннисем хăйсем пуçтаракан укçа-тенкĕпе ĕç хатĕрĕ (ятарлă пусма тата сĕреке) туянаççĕ.

Май пуррипе, май килнипе çынсем хăшĕсем кăнтăрла, теприсем каçпа ĕç хыççăн тухса çыхаççĕ. Ĕç хыççăн пулăшакансем иккĕмĕш сменăна тухатпăр теççĕ, тивĕçлĕ канурисем: «Эпир кунта ăшăра, мĕн çиес килет çавна çиетпĕр, канас килет – канатпăр. Салтаксене сетка çыхса та пулин пулăшас. Пирĕн сетка та хӳтĕленме пулăшатех пулĕ», – теççĕ.

Сетка çыхнă вăхăтра тепĕр чух салтаксемпе телефонпа шăнкăравласа çыхăнса калаçма та май пулать. Салтаксем пурте илтмелле тав сăмахĕ калаççĕ, сетка çыхакансем вара салтаксене ăнăçу сунса хăйсене упрама ыйтаççĕ, килте кĕтнине калаççĕ.

Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Ойкас ялĕнче пурăнакан Василиса ав килĕнче те сетка çыхать. Кашни кунах хăйĕн пушă вăхăтне çапла ирттерет. Мăн Сĕнтĕре çӳреме кансĕртерех пулнăран хăйне хăй ĕçпе тивĕçтерет вăл.

Салтаксем кирек мĕнле пулăшушăн та, кирек камăн пулăшăвĕшĕн те савăнаççĕ. Сетка-и вăл е металл шырамалли хатĕр-и, йĕркеллĕ атă-пушмак-и вăл е ăшă тумтир-и, ачасен çырăвĕ-и е аслисем туянса панă тепловизор-и... – пуриншĕн те, пурне те тав сăмахĕ калаççĕ. Пирĕн пулăшу яланах вырăнлине палăртаççĕ.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Техникăна – хĕллехи управа

# Чылай çĕре алă çитеймен-ха

Хресчен çулталăкăн кирек хăш тапхăрĕнче те алă усса лармасть. Çакна эпир çур акирен пуçласа уйхир юрпа витĕнччченех куратпăр. Тăрăшса ĕçлекен те, умри ĕç çине алă сулакан та çак вăхăтра куç хĕрринче юлмаççĕ.

Кăçал тырă-пулă ӳстерекен те, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен те ытлă-çитлĕ продукци туса илессишĕн çанă тавăрса тăрăшрĕç. Ĕçлени харама каймарĕ – кашнийĕнех кĕлечĕсем тулли. Çак тăрăшулăх паян ыранхи пирки те тĕплĕ шутлама ыйтать. Анчах ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсен машинăпа трактор паркĕсене çитсе курсан, вырăнти ĕç-хĕлпе паллашсан, çак шухăшлав курăнсах каймасть.

Кăçалхи уй-хир ĕçĕсене муниципалитет округĕнчи çĕр ĕçченĕ хăйĕн тăрăшулăхĕпе вăхăтра тата çухатусемсĕр ирттерме пултарчĕ. Ĕçленине кура тухăçĕ те савăнтарчĕ ăна. Уй-хир ĕçĕнчен пушаннă май хресченĕн хăйне пулăшнă ял хуçалăх техникин малашлăхĕ пирки те çиччĕ виçсе пăхмалла пек, анчах...

Муниципалитет округĕн пуçлăхĕн Алексей Матросовăн йышăнăвĕпе уй-хир ĕçĕсене хутшăннă техникăна управа лартассипе ирттерекен конкурса пĕтĕмлетмелле иртнĕ эрнере ур-хир ĕçĕнчен пушаннă техника патне çитрĕмĕр. Тӳрех каламалла, паянхи кунпа çеç пурăнманнисем ял хуçалăх техникине ГОСТпа килĕшӳллĕн управа лартассипе кăçал та çанă тавăрсах ĕçлерĕç. Çапла вара паян Суворов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Чкалов яч. хис., «Герой» хуçалăхсенче пĕр тĕллевпе тăрăшни куç умне пулчĕ. Эпир вырăна çитнĕ чух ку ыйтупа «Свобода» пĕрлешӳре те уяр кунри кашни сехетпе туллин усă курма тăрăшни палăрчĕ. Анчах ыттисем вара ĕçре куллен кирлĕ техникăн малашлăхĕ пирки туллин шутланине асăрхамарăмăр. Вĕсенче ял хуçалăх техники патне алă çитменччĕ-ха.

«Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕнче кăкарса ĕçлемелли кăткăс техникăна ангара вырнаçтарнă та ыттисене «маннă». Хуçалăхăн техника упрамалли вырăнĕ те, майĕ те пуррине шутласан, çак çитменлĕх нумай ыйту çуратрĕ.

«Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕнче те «хир карапĕсен» урапиcене минераллă удобрени миххисемпе чĕркенисĕр пуçне **(сăн ӳкерчĕкре)** ял хуçалăх техникин ĕмĕрне тăсассипе нимĕн те туман. Çумăр айĕнче ларакан комбайнсен пиçиххийĕсемпе сăнчăрĕсене пушатман, вĕçертсе хуман, ĕçлев агрегачĕсене куçаракан штоксене çивĕ çумăртан хӳтĕлеменрен вĕсем кĕрхи ăмăр çанталăка хушма çутă парса лараççĕ.

«Бездна» тата «Ударник» хуçалăхсем хăватлă техникăпа чухăн мар. Анчах вĕсенче те ăна упрассипе хальлĕхе туллин ĕçленĕ теме çук-ха. Кунта та, Ильич ячĕпе хисепленекен пĕрлешӳллĕ хуçалăхра та эпир пынă кун техникăна управа лартассипе ĕçлени курăнсах каймарĕ. Сывлăшра вара «шурă шăнасем» те курăнкалатчĕç. Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче Николай Аврамов механизатор «Кировец» тракторпа кĕрхи сухараччĕ.

Техникăна управа лартассипе çителĕклĕ ĕçленĕ тесе Александр Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ пирки те çирĕплетсе калама çук. Çакă çеç паллă, çĕнĕ техника паян юр-çумăр айĕнче ларни вĕсен малашлăхĕ çине ырă витĕм кӳместех.



Уй-хирте ĕçлемелли техникăна упраманнисем татах çĕнĕ те хăватлă техника туянасси пирки шутлани ыйту çуратать. Техникăна хĕллехи управа лартман хуçалăхсенче ĕç агрегачĕсем çум тыткăнĕнче пулни те пĕрре мар куç умне пулчĕ. Çичĕ хут тар тăкса экономикăна тĕреклетететпĕр те кĕр çитсен хамăр ĕçленине хамăрах манăçа хăваратпăр... Айăпне вара камра шырамалла-ши?

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн редакторĕ.**

Паллă ентеш

# Григорий Алексеев ҫуралнăранпа – 120 ҫул



Совет Союзӗн Геройӗ Григорий Алексеевич Алексеев ҫуралнăранпа октябрӗн 25-мӗшӗнче 120 ҫул пулчӗ. Вăл Исетеркке ялӗнче йышлă ҫемьере 1903 ҫулта ҫуралнă.

Сакăр ача амăшӗ Татьяна Николаевна колхоз уй-хирӗнче ӗҫленисӗр пуҫне ҫынсем валли ҫитмӗл литрлă хуранпа апат пӗҫернӗ, ҫӗвӗҫ пулнăран ҫынсем валли ҫăмăл тум та, хулăммине те ҫӗленӗ. Ашшӗ те колхоз ӗҫне хутшăннă, утарҫăра ӗҫленӗ, вӗсен пăри арманӗ пулнăран пăри авăртнă. Григорий Кондратий Трофимович класӗнче вӗреннӗ. Учитель ҫак ача хăйӗн пекех вӗрентекен пуласса ӗмӗтленнӗ.

Григорий 1925 ҫулта Хӗрлӗ Ҫар ретне тăнă, службăри икӗ ҫула артиллери полкӗнче ирттернӗ. Салтакран Иваново облаҫӗнчи Долматовски поселока таврăннă та вăрман хуҫалăхӗнче ӗҫлеме пуҫланă. Хыҫҫăн Кинешма хулинче участок милиционерӗ пулнă. «Атте-анне, маншăн ан кулянăр, йăлтах йӗркеллӗ, ӗҫлеме вырнаҫрăм, ӗҫӗ килӗшет», – тесе ҫырнă вăл тăван киле пӗр ҫырура.

Унтах вăл 1929 ҫулхи октябрӗн 12-мӗшӗнче вырăс хӗрӗпе, 1903 ҫулта ҫуралнă Анна Малыгинăпа мăшăрланнă. 1931 ҫулхи июнӗн 23-мӗшӗнче Римма тата 1934 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнче Валентин ачасем ҫуралнă.

1941 ҫулхи ноябрь уйăхӗнче каллех ҫар ретне тăнă, Тăван ҫӗршывăн Аслă вăрҫине тухса кайнă. Тӗп фронтра ҫапăҫнă. Вăрҫăн малтанхи кунӗсенчех шăллӗ, 19-ти Иван, пуҫ хунă. Ҫакăн хыҫҫăн унччен ҫарта пулнă пиччӗшӗсем фронта кайма повестка илнӗ.

Ҫапăҫусенче Григорий хастарлăх кăтартнă. Ржев хули патӗнчи пӗр ҫапăҫура тăшман танкне хăвăрт тивсе илекен шӗвек тултарнă савăта ывăтса ҫунтарнă, аманнă. Госпитальте сипленнӗ хыҫҫăн каллех фронта таврăннă.

Тăван яла ҫакăн пек юлашки ҫыру килнӗ: «Атти-апи, Украина ҫӗрӗ ҫинче ҫапăҫатăп. Вăрҫă хирӗнчен ҫыратăп. Хам умра авалхи Киев хулине куратăп. Пире Крещатка тата Успени соборӗн ишӗлчӗксем чӗнеҫҫӗ. Совет ҫыннисем, узниксем кăшкăрнисем, макăрнисем илтӗнеҫҫӗ, вӗсем пирки шухăшлани ыйха путма памасть. Нимӗҫ аркатнă нумай хулана ҫитсе куртăм. Нимӗҫе пирӗннисем Мускав патӗнче тытса чарман пулсан, пирӗн ялсене те тапăнӗччӗҫ».

Тепӗр ҫапăҫура Григорий тăракан взвод Днепр сылтăм енне каҫса плацдарма ҫавăрса илме хушу илнӗ. 1943 ҫулхи октябрӗн 16-мӗш каҫхине Гомель облаҫӗнчи Лоев поселокӗ патӗнче, тăшман вут-ҫулăм ҫунтарнине пăхмасăр, десант ушкăнӗнче Днепр урлă каҫма тытăннă. Салтаксем сулăсем ăсталаса ҫула тухнă. Ҫыран хӗррине ҫитеспе пирӗн салтаксене тăшман асăрханă. Хӗрӳ ҫапăҫу чылайлăха пынă, совет салтакӗсем каялла чакман, анчах та пӗрин хыҫҫăн тепри вилнӗрен йыш сахалланса пынă. Сăрт ҫамки курăнсанах Григорий шыва сикнӗ, ҫырана ишсе ҫитекенӗ вăл кăна пулнă.

Григорий Днепр шывӗ ҫывăхӗнчи хаяр ҫапăҫура паттăрлăхпа палăрнă. Йывăр суранланнă пулсан та ҫапăҫу хирӗнчен кайман. Вăл тăшманăн хăй еннелле килекен танкӗсене тӗп тума тытăннă. Тăшман танкӗсене сирпӗнтернӗ, вăл шутра «тигр» та пулнă. Ҫапах та тăшман малалла талпăннă. Улттăмӗш танк Григорий ҫинелле пынă. Вăл пӗтӗм вăй-халне пухса граната ҫыххине танк ҫине ывăтнă. Танк чарăнса ларнă та сирпӗннӗ.

Ҫын тӗлӗнче ҫавăн пек вут-ҫулăм сирпӗнсен ҫын чӗрӗ тата унăн кӗлетки ваклanmасăр юлма пултарасси иккӗлентерет. Мӗншӗн тесен хăҫан вилни пирки информаци тӗрлӗрен. Тискер ҫапăҫура йывăр аманнă, госпитальте тăна кӗнӗ, анчах та сывалайман тесе ҫыраҫҫӗ. Ноябрӗн 9-мӗшӗнче вăл госпитальте вилнӗ тени те пур. Хăш-пӗр документ тăрăх вăл хăйне сумлă ят панине пӗлнӗ. Тепӗр ҫӗрте ҫырнă тăрăх, вăрҫă хирӗнче санитарсем йăтнă чухне вилсе кайнă.

Исетеркке 1943 ҫулхи октябрӗн 30-мӗшӗнче Григорие Совет Союзӗн Геройӗ ятне пани пирки информаци ҫитнӗ. 1943 ҫулхи октябрӗн 31-мӗшӗнчи 258 номерлӗ «Красная Звезда» хаҫатра Днепр патӗнчи ҫапăҫура паттăрлăх кăтартнă совет салтакӗсен ячӗсене пичетлесе кăларнă, вăл шутра Исетерккӗ салтакӗн ячӗ те пур.

Пирӗн ҫемье архивӗнче Григорий мăшăрӗ Нюра ҫырнă ҫырусем халӗ те упранаҫҫӗ, вӗсене эпир миҫе хутчен тытса вуланă пулӗ, чун-чӗрене ҫывăх вӗсем. Ҫырури пӗр сыпăк: «Эх, как бы я хотела повидать маму, поговорить с ней, поплакать на ее старческой груди. Я потеряла одного дорогого человека для нас обоих. И мне тяжело, а ей как тяжело, она сколько сыновей потеряла. Саша, поцелуй за меня старенькую маму. Мне 61 год, я считаю маме 91 год... Берегите ее». Кунта сăмах Григорий амăшӗ Татьяна Николаевна пирки пырать.

Иваново облаҫӗнчи Заволжск хулинче Григорий Алексеева халалласа палăк лартнă.

**Валентина МАКАРОВА,**
**Роза МАКАРОВА.**

Октябрӗн 28-мӗшӗ – Сăр тата Хусан хӳтӗлев чиккисене тума хутшăннă ҫынсене асăнмалли кун

# Синкерлӗ кунсене манар мар

Чăваш Республикин Пуҫлăхӗ Олег Николаев хушăвӗпе республикăра октябрӗн 28-мӗшӗнче Сăр тата Хусан хӳтӗлев чиккисене тунă ҫынсене асăнмалли кун иртет. Асăну кунӗнче «Культура» наци проекчӗ шайӗнче хӳтӗлев чиккисене тума хутшăннă ҫынсене халалласа Куславкка тăрăхӗнчи мемориалта ҫӗнӗ музей уҫăлать.

Пирӗншӗн вăл вăхăтри кашни самант пӗлтерӗшлӗ. Хӳтӗлев чиккисене Чăваш Енре 1941 ҫулхи октябрӗн 28-мӗшӗнче тума пуҫланă. Ҫав кунран тытăнса Патшалăх оборона комитечӗн 1941 ҫулхи октябрӗн 16-мӗшӗнчи хушăвӗпе 17 ҫултан аслăраххисене мобилизацилеме тытăннă. Халăх комиссарӗсен канашӗпе ВКП(б) Чăваш обкомӗн уйрăм ларăвӗнче «Об организации и проведении работ по возведению на территории Чувашской АССР Сурского и Казанского рубежей» вăрттăн йышăну тунă.

Тăшман Мускав хулине илес пулсан, хӳтӗлев чиккисем тăшмана Хусана кӗме чарса тăмалла пулнă. Ҫакă вăл пӗтӗм совет халăхӗн ударлă стройки пулса тăнă. Окопсен тăршшӗ 380 км, танлаштарма, республика территорийӗ ҫурҫӗртен кăнтăралла 200 км кăна. Архив документӗсем ҫак ӗҫ тапхăрӗ 45 куна тăсăлнине ҫирӗплетнӗ. Тӗрӗссипе вара мобилизаци пирки пӗлтернӗ вăхăтран тытăнса ӗҫ вӗҫленни пирки Мускава хыпар яриччен 3 уйăх иртнӗ.

Ӗҫ хатӗрӗсем ҫитмен, 45 ҫын пуҫне 1 лум тивнӗ. 40 градус сивӗре шăн ҫӗре таккама тивнӗ, вут хурса ăшăтса катнă. Кунсерен строительство ӗҫне вăтамран 85 пин ҫын хутшăннă, хăш чухне ӗҫлекенсен йышӗ110 пин ҫынна та ҫитнӗ. Ҫак вăхăтчен пирӗн республикăри нимӗнле стройка та ҫавăн чухлӗ ҫынна пухман. Танлаштарма вăрҫă хыҫҫăнхи пӗтӗм союзри икӗ стройкăна илсе пăхма пулать: «Химпром» тата Шупашкар ГЭС-ӗ. Чи хӗрӳ тапхăрта «Химпром» предприятие тунă ҫӗре – 14 пин таран, ГЭС тума 11 пин ҫын хутшăнни паллă.

12 ҫул хушшинче Шупашкар ГЭС-не тунă ҫӗрте 70 млн кубла метр ҫӗр чавнă. Ҫулталăка вăтамран 5,8 млн ытларах кубла метр тивет. Ку ӗҫсене алăпа мар, йывăр техника тунă. Сăр хӳтӗлев чиккине тунă ҫӗрте вара алăпа 4,9 млн кубла метр ҫӗр чавса кăларнă.

Республикăра 6 ВПС (военно-полевое сооружение) йӗркеленӗ. 1-мӗш ВПС-а Етӗрне, Сӗнтӗр, Советски, Элӗк районӗсем кӗнӗ. Ун чухне Муркаш уйрăм район пулман, ҫавна май ялсем ăста вырнаҫнине кура тӗрлӗ района кӗнӗ. Пирӗн тăрăх кӗрекен 1-мӗш номерлӗ ВПС-ăн 24540 ҫуран ҫынна, утпа ӗҫлекен 1900 ҫынна явăҫтармалла пулнă. Вӗсен хăйсемпе пӗрле 12400 кӗреҫе, 710 катмак, 910 лум, 570 кувалда, 1225 савăл, 1220 платник пуртти, урлă касмалли 300 пăчкă, тăрăхла касмалли 1283 пăчкă, 510 мăлатук, 245 ийӗ хатӗрлесе илсе каймалла пулнă. Ҫаксем йăлтах пӗр участок валли кăна.

Сăр рубежӗ Сăр улăхӗ ҫумӗпе Етӗрне районӗнчи Засурье ялне, Хӗрлӗ Чутай ялӗнчи Пантьăка, Улатăр районӗнчи Сăр Майданне, Улатăра Ульяновск чикки таран ҫыхăнтарнă. Ҫакăн тăршшӗ 80 км пулнă.

Истори страницисене уҫма вара Чăваш патшалăх истори архивӗ пулăшать. Окоп чавма каякансене кашни колхозăн апат-ҫимӗҫпе тивӗҫтермелле пулнă. Пӗр протоколтан илсе кăтартатăп. Калайкасси ял Советӗнчи «Ударник» колхоз правленийӗ 1941 ҫулхи январӗн 7-мӗшӗнчи лару протоколӗнче ҫапла ҫырнă: «Сăрă шу хӗрне ӗҫлеме каякан рабочисем валли аш ҫук пирки фермăра 1 ӗне браковать тума йышăнас, вӗсене 1 кг аш 10 тенкӗпе памалла тăвас. Эвакуированнăйсене ыраш 1 кг 3 тенкӗпе, паранкă 1 кг 1 тенкӗпе парас. Сӗт марясемшӗн те, колхозниксемшӗн те пӗр хакпа – 5 тенкӗпе».

Архив документӗнче палăртнă тăрăх, ҫак строительствăра ӗҫлекен ҫынна пӗр кунта 80 гр аш, 100 гр кӗрпе памалла пулнă. Анчах та нормăпа пăхнă ҫимӗҫ пурне валли ҫитмен, килте мӗн пур, ҫавна илсе кайнă. Аса илӳсем тăрăх килтен илсе тухнă ҫимӗҫ хăшӗн-пӗрин, ҫулӗ вăрăм пулнипе, ҫул ҫинчех пӗтнӗ. ЦК ВКП(б) пропагандăпа агитаци управленийӗн ертӳҫине тăратнă докладнойра ҫапла ҫырнă: «Многие из них к месту работы сделали более 100 км путь».

Архиври пӗр ҫырăва илсе кăтартас килет. «Анне, эсир мана текех кураймăр пулӗ, эпӗ те сире. Ҫипуҫ, ҫӗр улми ярса парăр-ха. Ҫынсем окоп чавнă чухне малтан та вилни пулнă...». Ҫакна хушса хăварам, ҫав ӗҫе хутшăннă ҫынсемпе мана та маларах тӗл пулса калаҫма тивнӗ. Ҫынсем сивӗпе кӳтсе, выҫса вилнисем пулнă, хăшӗ ҫул ҫинче шăнса ларнă.

Мемеккассинчи Татьяна Андреевна учительница халӗ ҫут тӗнчере ҫук ӗнтӗ, унăн ҫутă сăнарӗ вара ман умра. Вăл каланă тăрăх, вӗсене институтра вӗреннӗ чухне ҫири тумпа кăна окоп чавма илсе тухса кайнă. «Тăвăнса ҫитнипе куҫран куҫҫуль тумлатса, алăсене чӗтретсе киле ҫыру ҫыратăп. Мана хирӗҫ ҫыракан ҫук, тăхăнмалли, ҫимелли ярса паракан никам та ҫук. Вилсе пӗтнӗ пулӗ тетӗп... Ӗҫ пӗтиччченех ӗҫлерӗмӗр. Киле чӗрӗ ҫитессӗн туйăнман, чирлесе кайрăм, урасем утми пулчӗҫ, ҫул ҫинче пире лартса килекен пулчӗ. Шăнса кӳтнӗскер, выҫса ҫитнӗскер, шăл ҫыртса утса яла ҫитрӗм. Тăван кил алăкне уҫма та хăратăп, никам та юлман пулӗ тетӗп. Алăка уҫрăм та кăшкăрса макăрса ятăм...». Ҫапла пулнăччӗ унăн аса илӗвӗ.

Предприятисен окопсенче ҫирӗплетӳсем тума тӗрлӗ материалпа тивӗҫтермелле пулнă. Тӗслӗхрен, Чувашстройтрест организаци 500 штук тимӗр бетон шлепке хатӗрлеме хушу илнӗ.

Окоп чавас ӗҫ вӗҫленнӗ май, ВКП(б) обком бюровӗ СССР оборона патшалăх комитетне «О предоставлении правительственных наград лучшим участникам, проявившим подлинные образцы трудового героизма на оборонительных рубежах» ходатайствăпа тухнă. Унта 50 ҫын ятне кӗртнӗ. Вăл шутра Ярославка ялӗнче 1918 ҫулхи майăн 13-мӗшӗнче ҫуралнă Мария Никифоровна Хозикова ячӗ те пур. Окоп чавас ӗҫе вăл малтанхи кунсенче пуҫăннă та мӗн вӗҫленичченех ӗҫленӗ. Ял Совечӗн депутачӗ бригадăри ӗҫченсемшӗн ырă тӗслӗхре пулнă. Пӗр кунхи ӗҫ нормине вăл 250 процент пурнăҫланă. Ăна 1942 ҫулхи октябрӗн 2-мӗшӗнче Ленин орденӗпе чысланă.




Хӳтӗлев чиккисем 1942 ҫулхи январӗн 20-мӗшӗ валли хатӗр пулнă. Январӗн 21-мӗшӗнче 12-мӗш Ҫар управленийӗн ертӳҫи Леонюк, Совнарком ертӳҫи Сомов, обком секретарӗ Чарыков шалти ӗҫсен наркомӗ Л. Берий ячӗпе телеграмма янă. Унта ҫапла ҫырнă: «Задание ГКО по строительству Сурского оборонительного рубежа выполнено в срок и на отлично. Объем вынутой земли – 3 миллиона кубических метров. Отстроено 1600 огневых точек, 1500 землянок, 80 окопов с ходами сообщений». Рубежăн Хусанти пайне тепӗр пилӗк кунтан вӗҫленӗ.

Вăрҫă историйӗ аяккарах та аяккарах юлса пырать. Унта хутшăннисем, ҫав синкерлӗ вăхăта чăтса ирттернисем пирӗн хушăра сахаллансах пыраҫҫӗ. Тури чăвашсен музейӗн ӗҫченӗсем пӗлтернӗ тăрăх, Муркаш муниципалитет округӗнче окоп чавас ӗҫе хутшăннă ултă ҫын пурăнать, вăл шутра – Вера Павлова.

Хăй пирки вăл ҫапла каласа кăтартать: «Эпӗ 1924 ҫулта Элӗк тăрăхӗнчи Питӗшкассинче ҫуралтăм, Йӳҫкасси ялӗнче 1950 ҫултанпа пурăнтăм. Халӗ Муркашра хӗрӗм патӗнче, кӗҫӗн ывăлпа пӗрле. Атти-апи 11 ача ҫуратнă. Халӗ эпӗ тăвансенчен пӗчченех юлтăм пулӗ тесе шухăшлатăп.

17 ҫула кайсан Сăр шывӗ хӗррине окоп чавма ячӗҫ. Пирӗн ялтан хӗрсем нумайăн кайрăмăр. Ӗҫленӗ вăхăтра Чартакан ялӗнче хваттерте пурăнтăмăр. Вырăнӗ ҫитместчӗ, урайӗнче юнашар-юнашар ҫывăраттăмăр. Килтен ҫӗр улми, купăста илсе кайнине астăватăп. Колхоз хăй те чухăн пулнă, мӗн пулнă пулӗ пире валли парса ямалли. Кил хуҫи ирех тăрса мӗн пуррипе апат пӗҫеретчӗ, ҫисе каяттăмăр. Каҫхине вара ҫимелли пурин валли ҫитместчӗ, выҫăллах кӗрсе выртаттăмăр. Кăмака ҫумне ялапа ҫакма пурин валли вырăн ҫитместчӗ.

Салтака кайман арҫынсем лумпа такканă катăксене алăпа йăтса утаттăмăр, хамăр та таккаттăмăр. Пӗтӗм вăйпа аяккалла утмаллачӗ, унсăрăн каялла анчах кусса анать. Ҫӗр шăтăкне кăмака пек туса тар хуратчӗҫ, вутăпа чӗртсе сирпӗтсе яратчӗҫ. Шăн муклашкасем ҫын пуҫӗ ҫине ӳкнипе ҫынсем вилни те пулнă. Кашни яла чавма уйрăммăн вырăн паратчӗҫ. Камăн ҫăм тăла пулнă, ытлах аптăраман, пир йӗмлисем шăнса кӳтетчӗҫ. Атте пулнă пирки эпӗ ҫăпата тума пӗлмен.

Сăр хӗрринчен нушаланса пурăннă хыҫҫăн Ҫӗмӗрлене вăрман касма кăларса ячӗҫ. Унтан Вăрнара каякан ҫул тунă ҫӗрте, хыҫҫăн торф кăларнă ҫӗрте ӗҫлерӗм».

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

Патшалӑх пулӑшӑвӗ

# Юр ҫӑвичченех ҫырла татаҫҫӗ



Паян ял хуҫалӑхӗнче ӗҫлеме, хӑвӑн пуҫарулӑхупа пысӑк малашлӑхлӑ ӗҫе тытӑнма патшалӑх тӗрлӗ енлӗ пулӑшать. Агробизнеса аталантарма Раҫҫей Федерацийӗн Ял хуҫалӑх министерствичи пекех пирӗн республикӑра та ҫуллен миллионшар тенкӗ уйӑраҫҫӗ. Кунта Чӑваш Республикин Ял хуҫалӑх министерстви урлӑ ялсенчи агробизнеса аталантарма йӗркеленӗ «Перспектива» грант та пӗлтерӗшлӗ вырӑнта. Унӑн пулӑшӑвӗпе юлашки ҫулсенче ӗне тытса сӗт сӑвассине, сыр тӑвассине, пулӑ тата сурӑх ӗрчетессине, ҫырла ӳстерессине кӳлӗнес шухӑшлӑ ҫӗр ӗҫченӗ анлӑ усӑ курма пуҫларӗ. Иртнӗ кунсенче ҫакӑн пӗр тӗслӗхӗпе паллашма тӳр килчӗ.

Икӗ ывӑлпа пӗр хӗр ҫуратса ӳстернӗ Антонинӑпа Валерий Кондратьевсем Катькас территори пайӗнчи Чурикасси ялӗнче пурӑнаҫҫӗ. Туслӑ мӑшӑр ҫӗр ӗҫ юратӑвне ашшӗ-амӑшӗнченех алла илнӗ. Ӑна паян малашлӑха пӑхса аталантарса пыраҫҫӗ. Ҫак ӗҫе ачисене, мӑнукӗсене явӑҫтараҫҫӗ.

– Ҫӗр ӗҫне юратакан выҫӑ лармасть, ҫарамас та тӑрса юлмасть, – йӑл кулӑпа калаҫать ҫемье пуҫӗ тӑватӑ мӑнук пуррине пӗлтерсе.

Колхозра ӗмӗрленӗ ашшӗпе амӑшӗ – Семен Ивановичпа Валентина Григорьевна – 4 ывӑл ҫуратса ӳстернӗ. Вӗсем пурте ялта тымарланнӑ, ҫӗр ӗҫӗпе туслашнӑ. Валера, ҫемьере кӗҫӗнни пулнине пӑхмасӑрах, нихӑш ӗҫре те пичӗшӗсенчен юлман: выльӑх пӑхнӑ, ҫӗр улми лартнӑ, кӑларнӑ, ҫуркунне йӑран пуснӑ, ҫулла ҫум ҫумланӑ, утӑ ҫулса хӗл валли выльӑх апачӗ янтӑланӑ, кӗтӳ кӗтнӗ, юлташӗсемпе ял пӗвинче шыва кӗнӗ, каннӑ чухне лапталла вылянӑ. «Атте-аннене кура ӗҫрен ютшӑнса тӑман эпир», – терӗ Валерий Семенович **(сӑн ӳкерчӗкре).**

Ял ачин кашни ӳсӗмре хӑйӗн ӗҫӗ. Ҫапла вара Валера кӗреплепе утӑ та тавӑрнӑ, ҫул ҫитсен курӑк та ҫулнӑ, йӗтем ҫинче тырӑ аланӑ, миххе тырӑ-пулӑ тултарса кӗлете те кӗртнӗ.

– Пурнӑҫпа тан пыма тӑрӑшатпӑр эпир. Ҫапла вара патшалӑх ял ҫыннине ҫӗнӗ ӗҫе кӳлӗнпе пулӑшма пуҫласан хама ачаран ҫырла лартса ӳстерес ӗмӗт канӑҫсӑрлантарни мала тухрӗ. Тӗрлӗ явапллӑ ҫӗрте ӗҫлесен те 5 ҫул каялла килте виктори лартса ӳстерес шухӑш патне ҫитсе тухрӑм, – аса илчӗ ҫӗнӗ ӗҫе пуҫӑнни пирки Валерий Семенович мана теплицӑсемпе паллашма чӗннӗ май.

Кил хуҫи 5 ҫул каялла Краснодар облаҫне кайса ҫӗр ҫырлин 6 – 7 сортне кӳрсе килсе лартнӑ. Ҫӗр ҫырлин ятарлӑ пӗчӗк лаптӑкӗ мӑшӑрӗ тата ачисем тӑрӑшнипе тепӗр ҫулнех 20 соткӑна ҫитет. Паянхи куна вӑл унӑн харпӑрлӑхӗнче 2 гектара яхӑн. Ҫырла туса илес технологие ҫирӗп алла илнӗскер, хӑй пуҫӑннӑ ӗҫшӗн манӑн пӗлӗшӗм пӗртте кулянмасть. Иртнӗ ҫулсенче ҫырлапа ӗҫлессине вӑл ывӑлӗ ҫине куҫарнӑ. Антон паян ашшӗн ӗҫне малалла тӑсать. Фермерсем хатӗрлекен шкулта вӗренсе иртнӗ ҫулсенче вӑл «Перспектива» грантпа ЧР Ял хуҫалӑх министерстви урлӑ 4 миллион тенкӗлӗх гранта тивӗҫнӗ. Ку вара ҫырла лартса ӳстерессинче хушма тӗкӗ пулнине пытармарӗ кил хуҫи. Паян асӑннӑ хуҫалӑхра ҫӗр ҫырлин ҫулла ӑнса пулакан «азия» тата юр ҫӑвиччenes пуҫтарма май пур ремонтантлӑ «мурана» сортсем теплицӑра та, йӑран ҫинче ятарлӑ пленка айӗнче те, уҫӑ вырӑнта та ӳсеҫҫӗ **(иккӗмӗш сӑн ӳкерчӗкре)**.

Вӗсемсӗр пусне хуҫалӑхра хӑмла ҫырли те, виноград та, кашкӑр ҫырли те (жимолость) пур. Ҫитес ҫултан кӑвак ҫырла та (голубика) пуҫтарма пуҫлӗҫ. Ҫырла вӑхӑтӗнче ӑна пуҫтаракансем хушшинче кил хуҫисемсӗр пусне кӳршӗ ялсене те, хуларан ятарласа ӗҫлеме килекенсене те курма пулать. Вӗсем пухнӑ ҫырла Раҫҫейӗн тӗрлӗ кӗтесне ӑсанать.

Патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ курса Кондратьевсем пӗчӗк трактор, кӑкарса ӗҫлемелли агрегатсем, пленка витмелли хатӗр, ҫырла усрама холодильник туяннӑ. Ҫырлана тумла мелӗпе шӑварса, апатлантарса тӑраҫҫӗ, ӑна тухӑҫлӑ туса илме ятарлӑ программӑпа ӗҫлеҫҫӗ.

– Ватӑлма вӑхӑт ҫук, – сыв пуллашрӗ манпа Валерий Семенович.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сӑн ӳкерчӗкӗсем.**



Выльӑх тухтӑрӗпе калаҫатпӑр

# Кӳршӗри республикӑра – хӑрушӑ чир

***Раҫҫей тӗлӗшпе тӗрлӗ санкци ӗҫленӗ вӑхӑтра хамӑр туса илекен промышленность тата ял хуҫалӑх продукчӗсен пӗлтерӗшӗ малти вырӑна тухрӗ. Апла пулсан кунта тӗрлӗ тимлӗх пирки те манма юрамасть.***

***Сыснасен африка чуми – выльӑх-чӗрлӗх отраслне пысӑк сӑтӑр кӳме пултаракан хӑрушӑ чир. Сысна пӑхас йӗркене пӑхӑнмасан вӑл кирек ӑҫта та самантрах вӑй илме пултарать. Юлашки тӗслӗхе хамӑрпа кӳршӗллӗ Мари Эл Республикинче юпа уйӑхӗн 11-мӗшӗнче Килемар муниципалитет округӗнчи «Ардинское» сунар хуҫалӑхӗнче тупса палӑртнӑ. Чир ҫӑл куҫӗ – вилнӗ хир сысни. Хӑрушӑ чир юнашарах пулнӑран паян хамӑр тӗпеле районти выльӑх чирӗсемпе кӗрешекен станцин тӗп врачне Татьяна КИСЕЛЕВӐНА чӗнтӗмӗр. Халӗ – ӑна сӑмах:***

– Малтанах сыснасен африки чуми тӗлӗшпе Раҫҫейри лару-тӑру ҫинчен. Кӑҫалхи 9 уйӑхра ҫӗршыври 21 субъектра асӑннӑ чирӗн 52 тӗслӗхне тупса ҫирӗплетнӗ. Вӗсенчен 44-шӗ авӑн уйӑхӗн 1 – 26-мӗшӗсенче палӑрнӑ.

Асӑннӑ чиртен хӳтӗленесси – республикӑра яланах малти вырӑнта. Ҫакна шута илсе ялсенче сысна усракан ҫынсемпе, ҫак отрасле тӗллевлӗ ӗрчетекенсемпе эпир ӑнлантару ӗҫӗсем ирттеретпӗр. Тӗллевӗ пӗрре – чире хамӑр тӑрӑха кӗртмелле мар. Палӑртса хӑваратӑп, йӗркене пӑхӑнсан асӑннӑ чиртен пӑрӑнса иртме, пысӑк ҫухатусенчен хӑтӑлма йывӑр мар.

Чир пуҫаруҫисем – чирлӗ е чирлесе иртнӗ сыснасем. Вирус илсе ҫӳресси ҫак чӗр чунсен 2 ҫул е ытларах та тӑсӑлать.

Хир сыснисем – ҫак вирусӑн тӗп ҫӑлкуҫӗ. Чирлӗ сыснан организмӗнчен асӑннӑ чирӗн вирусӗ юнпа, каяшпа, шӑкпа, сӑмсари йӑлмакапа, сӗлекепе тухать. Ҫапла вара инфекци хир сыснисем ҫӳренӗ улӑх-ҫаранпа тата вӑрманпа, сыснасене турттарнӑ транспорт хатӗрӗсемпе та ереме-сарӑлма пултарать. Ҫакна сыснапа ӗҫлекенсен самантлӑха та манмалла мар.

Ҫӳлерех каланине шута илсе сыснасене тата вӗсенчен хатӗрленӗ продукцие санкцилемесӗр турттаракан автотранспорт тӗлӗшпе те тимлӗхе ӳстермелле. Продукци хатӗрленӗ ҫӗрте ветеринарипе санитари документчӗсемсӗр какая йышӑнма пачах та юрамасть.

Сысна ӗрчетекен хуҫалӑхсенче Россельхознадзор сӗнӗвӗпе килӗшӳллӗн выльӑха сутиччен е пусиччен 7 кун маларах сыснасен Африка чуми тӗлӗшпе тӗрӗслев ирттермелле. Ку вӑл продукци пахалӑхне, унӑн ҫулне ҫирӗп тӗрӗслесе тӑма май парать.

Сыснасен Африка чуминчен хӳтӗленес тӗллевпе сысна тытакан-ӗрчетекен хуҫалӑхсенче хӳтӗленӳ ӗҫӗсене пӗр ҫын пек пурнӑҫламалла. Ҫак тӗллевпе:

– сысна тытакан килти хушма хуҫалӑхсене ют ҫынсем кӗресрен асӑрханмалла;

– сыснасене витерен кӑлармасӑр усрамалла;

– сыснасем тытакан пӳлӗмсене тӑтӑшах сӑвӑссемпе юн ӗҫекен ытти хуртсенчен тасатса тӑмалла;

– сысна сарайӗсене шӑшисемпе йӗкехӳресенчен тасатассипе ӗҫлемелле;

– апата пӗҫерсе ҫеҫ памалла;

– апат пахалӑхне, выльӑхсен иммунна системине сӑнасах тӑмалла;

– выльӑх тытакан пӳлӗмсене тӑтӑш дезинфекцилемелле;

– сыснасем ытти выльӑхпа хутшӑнасран асӑрханмалла;

– ветеринари документчӗсене пӑхса сывӑ сыснасем ҫеҫ туянмалла;

– сыснасене ятарлӑ вырӑнсенче пусса тирпейлемелле;

– хир сыснисен виллисене тупсан ҫийӗнчех вырӑнти ӗҫ органне е выльӑх чирӗсемпе кӗрешекен районти станцине пӗлтермелле;

– выльӑх апатне чир тӗлӗшӗнчен таса регионсенчен ҫеҫ туянмалла.

Маларах асӑннӑ йӗркесене тивӗҫлипе пӑхӑнсан ҫеҫ эпир хамӑр округа сыснасен африка чуми лексрен туллин сыхланма пултарӑпӑр.

Специалист ӑнлантарать

# Йытӑ-кушак усраканӑн та яваплӑх пур

***Хуҫасӑр йытӑсемпе кушаксем пирки сахал мар калаҫатпӑр, анчах вӗсен йышӗ сахалланни ҫав-ҫавах курӑнмасть. Юлашки вӑхӑтра вӗсене тытассипе районта тӗллевлӗрех ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Анчах ҫакӑ та ку ыйтӑва тӗппипех кун йӗркинчен кӑлармасть. Ҫавӑнпа та хаҫат редакцийӗн тӗпелне паян муниципалитет округ администрацийӗн ял хуҫалӑх тата экологи пайӗн пуҫлӑхне Татьяна ПАВЛОВӐНА чӗнтӗмӗр. Халӗ – ӑна сӑмах:***

– Хуҫасӑр йытӑ-кушак тытасси – пирӗн обществӑра ҫивӗч тӑракан ыйтусенчен пӗри. Паян ял урамӗсенче час-часах кӑкарман йытӑсем чупса ҫӳренине курма пулать. Ҫавӑн пекех хуҫасӑр кушаксем те ялсенче сахал мар. Ирӗкри йытӑсем ял ҫыннисене, ачасене ҫыртас хӑрушлӑх пысӑк. Кунашкал тӗслӗхсем час-часах пулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та кил хуҫалӑхра йытӑ-кушак усракансен ҫакна валли ятарлӑ йӗрке пуррине асра тытмалла.

Чӑваш Республикинчи хуласемпе ялллӑ вырӑнсенче йытӑ-кушак тытас правилӑсене Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн 2012 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗнче ҫирӗплетнӗ. Вӑл паянхи саманара йытӑ-кушак тытакансемшӗн – хӑйне евӗр саккун. Ӑна пурин те пӑхӑнмалла. Асӑннӑ правилӑсене хӑйсен кил хуҫалӑхӗнче йытӑ-кушак усракан кашни ҫыннӑн пӗлмелле. Ӑна пӑсакансен Раҫҫей Федерацийӗн тата Чӑваш Республикин саккунӗсемпе килӗшӳллӗн явап тытма тивӗ.

Йытӑ е кушак тытаканӑн малтанах вӗсемшӗн яваплӑха тӗп вырӑнта тытмалла. Чӗр чунсене таса та тирпейлӗ пӑхмалла, вӑхӑтра апатлантармалла. Ҫак чӗр чунсен хуҫисен вӗсене туянсанах кӗске вӑхӑтра хуҫи пурӑнакан адреспа вырӑнти патшалӑх ветеринари службинче регистрацилемелле. Регистрациленӗ йытӑ-кушака чи малтанах урни чирӗнчен вакцинӑламалла. Вӗсене ҫемье хӑй пурӑнакан хваттерте тытать пулсан, кил хуҫисен санитарипе гигиена нормине тата ветеринари йӗркине ҫирӗп пӑхӑнмалла. Темиҫе ҫемье пурӑнакан хваттерте йытӑ-кушак усрама пуринчен те ирӗк кирлӗ.

Килти хушма хуҫалӑхра ҫӗр участокӗ ҫителӗклӗ пулсан, кил хуҫи хӑйсен тӑватӑ хуралла тусне лайӑх карталанӑ территорире ирӗклӗ те, сӑнчӑрта та тытма пултарать.

Йытта уҫӑлма илсе тухнӑ чух хуҫин ӑна кӗске ҫыхӑра тата ҫӑварлӑхласа (намордникпа) тытмалла. Чӗр чунсене ирӗк панӑ вырӑнсенче ҫеҫ уҫӑлтарса ҫӳреме юрать. Енчен те уҫӑлтармалли вырӑна карта тытнӑ пулсан, йытӑсене ирӗклӗ чуптарни те йӗркене пӑсни пулмасть. Кунта ҫакна пӗлмелле: йытӑсене уҫӑлтармалли вырӑн пурӑнмалли ҫуртсенчен, ачасем вылякан вырӑнтан, шкул ҫулне ҫитмен ачасен учрежденийӗнчен, спорт лаптӑкӗсемпе шкулсенчен 25 метртан кая мар уйрӑлса тӑмалла. Хӑйсен тусӗсене уҫӑлтарма тухаканӑн ӳсӗр пулмалла мар.

Йытӑ-кушак тытаканӑн тасалӑх пирки те манас ҫук. Унӑн хваттерсенчи, подъездсенчи, килти хушма хуҫалӑхри тирпейлӗхе малта тытмалла. Йытӑ-кушака ачасем вылякан лаптӑксене, магазинсем ҫывӑхне, халӑх пӗрле усӑ куракан ҫуртсемпе территорисене ирӗклӗ ямалла мар. Пурӑнмалли ҫуртйӗр ҫывӑхӗнче те шӑплӑх тытасси пирки шутламалла.

Патшалӑх ветеринари службин ӗҫченӗсем ыйтнипе харпӑрлӑхри йытӑ-кушака тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла, вӑхӑтра профилактика прививкисем тумалла.

Килте тытакан йытӑ-кушак ӑнсӑртран вилчӗ пулсан е урни чирӗ пирки иккӗленӳ ҫуралсан пӗр тӑхтасса тӑмасӑр выльӑх тухтӑрӗпе ҫыхӑнмалла. Вилнӗ чӗр чунсене тухса пӑрахса тавралӑха варалама юрамасть.

**Анатолий БЕЛОВ**
**ҫырса илнӗ.**

Педагогпа наставник ҫулталăкĕ

# Пуриншĕн те ырă тĕслĕхлĕ педагог



Учитель ĕҫĕ питĕ пархатарлă. Шкул ачи мĕнле аталанасси, пурнăҫ ҫине мĕнле куҫпа пăхасси ытларах вĕрентекенрен килет. Вĕренекенсен тавракурăмне аталантарас тесен шкул программипе кăна ĕҫлени ҫителĕксĕр. Класс тата шкул тулашĕнчи ĕҫсем питĕ пĕлтерĕшлĕ. Хальхи вăхăтра ачасенче патриотизм туйăмне аталантарасси пысăк вырăн йышăнать. Ҫак ĕҫе чунтан парăннă учитель пирĕн округра сахал мар.

Эпĕ сире Шомик шкулĕнче историпе обществоведени тата право предмечĕсене вĕрентекен Александр Иванович Юнусов ҫинчен каласа парасшăн.

А. Юнусов 1965 ҫулхи мартăн 8-мĕшĕнче Ҫĕньял Муркаш ялĕнчи Нина Александровнăпа Иван Михайлович Юнусовсен ҫемйинче ҫут тĕнчене килнĕ. Муркаш вăтам шкулĕнчен ăнăҫлă вĕренсе тухнă. 1989 – 1994 ҫулсенче Шупашкарти И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ, историпе филологи факультечĕн истори уйрăмне пĕтернĕ. 1994 ҫултанпа Шомик шкулĕнче тимлет.

29 ҫул ытла тăрăшать вăл вĕрентӳ ĕҫĕнче. Миҫе ачана историпе обществоведени, право предмечĕсене алла илме пулăшман-ши вăл ҫак вăхăтра? «Александр Иванович уроксенче ҫирĕп ыйтать, тĕплĕ вĕрентет», – аса илеҫҫĕ халĕ унăн вĕренекенĕсем. Кашни ҫулах класс ертӳҫи пулнă. Юлашки ҫулсенче вăл директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕҫлекен ҫумĕ те.

Ĕҫне кура – хисепĕ. Ҫитĕнекен ăрăва воспитани парас тĕлĕшри пысăк ҫитĕнӳсемшĕн, нумай ҫул хушши ҫак сферăра таса чунпа ĕҫленĕшĕн А. Юнусов ҫак наградăсене тивĕҫнĕ: Шомик шкулĕн тата ял тăрăхĕн администрацийĕсен, Муркаш район администрацийĕн, райадминистрацин вĕренӳ пайĕн, ЧР Вĕренӳ тата ҫамрăксен политикин министерствин, РФ Вĕренӳ министерствин Хисеп грамотисемпе Тав хучĕсем.

– Пирĕн коллективра яланах пĕр-пĕрне ăнланма пĕлеҫҫĕ. Кирлĕ вăхăтра ĕҫпе те, сĕнӳ-канашпа та пулăшаҫҫĕ, – тет вăл.

Пурнăҫ уттинчен юлмасть Александр Иванович, яланах ачасемпе, вĕсен ашшĕ-амăшĕпе пулма тăрăшать. Час-часах тĕрлĕрен мероприяти йĕркелет.

А. Юнусов – тĕлĕнмелле пуян чун-чĕреллĕ, ырă кăмăллă, ĕҫĕпе таса та пултаруллă, ĕмĕчĕпе малашлăха куракан, чунне парса вĕрентекен. Хăйĕн пĕтĕм пурнăҫне вĕренӳ ĕҫне халалланă. Шкул сукмакне такăрлатма пуҫланăранпа кăҫал 29 ҫул ҫитрĕ.

Паянхи кун та вăл шкула кашни кун уява кайнă пек савăк кăмăлпа утать. Ачасене, хăйĕн ĕҫне юратни ăна чунне парса, хавхаланса ĕҫлеме хистет. Уҫă кăмăллă, лăпкă, ырă чунĕпе, ăшă куллипе самантрах вĕренекенсене тыткăнлать. «Манăн пурнăҫ шкулшăн, ачасемшĕн иртет. Хамран мĕн килнине йăлтах тума тăрăшнă, тăрăшатăп та, нихăҫан та пуҫа усман», – ҫапла аса илет иртнине пуриншĕн те ырă тĕслĕхлĕ педагог А. Юнусов. Унăн тĕп тĕллевĕ, ĕмĕчĕ – шкулти шăпăрлансене тарăн пĕлӳ панисĕр пуҫне пĕр тĕллевпе пĕрлештересси, ăслисене хисеплеме, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма вĕрентесси.

– Чăн-чăн вĕрентекен, хăйĕн ĕҫĕн ăсти, ҫамрăксен аслă наставникĕ, ҫирĕп кăмăллă та хытă ыйтакан, уҫă та ырă кăмăллă ҫын, – ҫапла хаклаҫҫĕ Шомик шкулĕн педагогĕсем, ĕҫтешĕсем А. Юнусов вĕрентекене.

Учитель профессине вăл ачаллах суйласа илнĕ. Александр Иванович пек учительсене Турă панă ăсталăхлă вĕрентекен теҫҫĕ. Ҫак ĕҫре тăрăшма унăн йăлтах пур: педагог таланчĕ, ачасене юратни, ăшă кăмăл, илемлĕх, ăс-тăн, чăтăмлăх, тапса тăракан вăй-хăват.

Вăл историпе обществоведени, право предмечĕсене вĕрентет кăна мар, ачасене чăн-чăн ҫын пулма, Тăван ҫĕршыва юрăхлă пулма хатĕрлет. Унăн вĕренекенĕсенчен чылайăшĕ аслă пĕлӳ илнĕ, вĕсем хушшинче тухтăрсем те, ҫар ҫыннисем те, учительсем те, журналистсем те, строительство инженерĕсем те, ытти специльноҫпа ĕҫлекенсем те вуншар.

– Маншăн пысăк чыс – вĕренекенсен тав сăмахĕ. Чылай ҫул иртсен те вĕсем тав туни чĕрене ăшăтать, малашне хавхаланса ĕҫлеме вăй парать, – тет вĕрентекен.

А. Юнусов хăйĕн ĕҫĕнче анлă тавракурăмлă пулнипе палăрса тăрать. Истори, право урокĕсене тĕплĕ ăнлантарать. Теорие пурнăҫпа ҫыхăнтарать. Ачасемпе урокра ҫеҫ мар, класс тулашĕнчи занятисенче те ĕҫлеме ӳркенмест.

Вĕренекенĕсем районти предмет олимпиадисенче те призлă вырăн йышăнса савăнтараҫҫĕ. Ачасем база шайĕнчи пĕлĕве кăна алла илменни те учитель ĕҫне тивĕҫлипе хак пама май парать.

А. Юнусов яланах ырă кăмăллă, питĕ яваплă, тӳрĕ чунлă. Пуринпе те пĕр чĕлхе тупма пултараканскер, йывăр самантра пулăшма хатĕрскер. Вăл – хăйĕн ĕҫне, тусĕсене, ĕҫтешĕсене, хăйĕн вĕренекенĕсене юратакан ҫын.

Ачасем вăл ырра вĕрентнине нихăҫан та манмаҫҫĕ.

**Геннадий МОИСЕЕВ.**

# Шкул тĕнчинче – 33 ҫул



Ольга Вишнева Шатракассинчи тĕп шкулта ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Унăн педагогикăри ĕҫ стажĕ 33 ҫулпа танлашать. Пархатарлă ĕҫшĕн вăл ҫак тапхăрта сахал мар ырă сăмах илтнĕ, хисеп, тав хучĕ, награда ҫĕнсе илнĕ. Чи хакли уншăн – хăй вĕрентсе кăларнă ачасем тата вĕсен ашшĕ-амăшĕ тав туни.

Ольга Александровна 1967 ҫулхи июнĕн 5-мĕшĕнче Ҫеҫмер ялĕнче ҫут тĕнчене килнĕ. Шатракасси 8 ҫул вĕренмелли шкулне (1982 ҫул), Калайкасси вăтам шкулне (1984) вĕренсе пĕтернĕ. 1990 ҫулта И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. 1990 – 1991 ҫулсенче Сыпай шкулĕнче ачасене пĕлӳ панă. 1991 – 2016 ҫулсенче Шатракасси шкулĕнче ачасене вĕрентнĕ. Унтанпа асăннă шкулта директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕҫлекен ҫумĕ пулса тимлет.

Пултаруллă та мал ĕмĕтлĕ вĕрентекен ĕҫне пысăка хурса хакланă. Унăн тĕрлĕрен Хисеп грамотипе Тав хучĕ вуншар. РФ Вĕренӳпе наука министерствин Хисеп грамоти те пур, ăна «Раҫҫей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕҫченĕ» паллăпа та наградăланă.

О. Вишнева хамăр округра чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен ăста педагогсенчен пĕри шутланать. Вăл вĕрентекен ачасем ҫултан-ҫул район тата республика шайĕнчи олимпиадăсенче, конкурссенче малти вырăнсене ҫĕнсе илеҫҫĕ. Ҫакă вара О. Вишнева хăй те питĕ маттур, хастар та пултаруллă пулнине ҫирĕплетет. Вăл – аслă категориллĕ вĕрентекен.

Ольга Александровна – вĕрентӳпе методика пособийĕсен авторĕ, регионсен шайĕнчи ăслăлăх конференцийĕсенче докладсем тăвать, учительсен ăслăлăх конкурсĕсен ҫĕнтерӳҫи тата призерĕ те. О. Вишнева чăваш литературине 5, 6, 7, 8, 9-мĕш классенче вĕрентессин ăслăлăхпа методика пособийĕсене хатĕрлесе пичетлесе кăларнă.

– Пурнăҫра тепĕр хут професси суйламалла килсе тухас пулсан та эпĕ вĕрентекен ĕҫнех суйласа илнĕ пулăттăм, – тет Ольга Александровна. – Чун-чĕререн юрататăп ачасемпе ĕҫлеме. Хам ҫине шанса тата кăмăлласа пăхакан ырă та таса куҫсене кашни кун курни мана хавхалантрать.

Ачасене ҫирĕп пĕлӳ панипе пĕрлех О. Вишнева вĕсене тĕрĕс воспитани парас ĕҫе те хастар хутшăнать, кăмăл пуянлăхĕпе чун ăшшине вĕсене пĕр шелсĕр парнелет.

**Геннадий ПРАВДИН.**

# Ашшĕ-амăш ĕҫĕ ачасене куҫни савăнтарать

Муркаш тăрăхĕ пултаруллă педагогсемпе пуян. Ку профессире тăрăшма ҫăмăл мар, ăна валли чăтăмлăх, ĕҫченлĕх, ачасене юратни кирлĕ. Чылайăшĕ шутланă тăрăх, учитель профессийĕ – чун туртăмĕ. Хайлавҫă хăйĕн произведенийĕнче пурăнать, скульптор – хăйĕн скульптуринче, лайăх учитель – ачасен шухăш-кăмăлĕнче, вĕсен ĕҫĕ-хĕлĕнче. Ҫапла шухăшлать Ильинка шкулĕнчи вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен, Раҫҫей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕҫченĕ Екатерина Таймаскина учитель.

– Педагог хăйне ачасене пама хатĕр пулмалла. Эпĕ 44-мĕш ҫул кашни ир кирек епле ҫанталăкра та тулли кăмăлпа шкула утатăп. Вĕренекенсене хамăн пĕлĕве пама каятăп, вĕсем ăслă-тăнлă ачасем пулччăр тесе тăрăшатăп, эпĕ вĕрентни вĕсен асĕнче ĕмĕрлĕхе пуласса шанатăп.

Мана ачасемпе ĕҫлеме килĕшет, эпĕ хам та вĕсемпе пĕрле вĕренсе пыратăп, ачасене ырă ĕҫ тума хавхалантаратăп. Кашни кун ачасемпе мĕн те пулин ҫĕннине пĕлетпĕр эпир. Эпĕ те вĕсемпе – тĕлĕнтермĕш тĕнчинче. Ача вăл хăйне майлă ҫăл куҫ, ҫак ҫăл куҫран ман пек ӳсĕмри ҫын та хăйне валли кăсăклине илме пултарать. Кашни ача ҫитĕнĕвĕшĕн чунтан савăнатăп, – ҫапларах пĕлтерет хăйĕн шухăшне учитель.

Екатерина Зиновьевнăн педагогика ĕҫĕ 1979 ҫулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче пуҫланнă. Ăна, И. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика институчĕн ют чĕлхе факультетне лекейменскере, тăван Ильинка шкулне аслă пионервожатăй пулса ĕҫлеме чĕннĕ. Ҫапла пуҫланнă шкулта ĕҫлесси.

Унтанпа вăхăчĕ нумай иртнĕ, чылай ĕҫ тунă, нумай йывăрлăха ҫĕнтернĕ, ҫитĕнӳ те сахал мар пулнă. Аслă пионервожатăй должноҫĕнче вăл ултă ҫул ĕҫленĕ. Ҫав вăхăтра шкулта ĕҫлес шухăш унăн пуҫĕнче вăйланнă кăна. Ҫавăнпа та ĕҫленĕ хушăрах И. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика институтĕнче вĕренсе пынă. 1985 ҫулта вара вăл вырăс чĕлхипе литературин учителĕн специальноҫне алла илнĕ. Ҫамрăк специалиста пысăк ĕҫ шаннă, 4 ҫул директорăн шкул тата класс тулашĕнчи воспитани ĕҫĕн ҫумĕ пулса тăрăшнă. Хыҫҫăн вара ҫамрăк учитель тĕп специальноҫпа ĕҫлеме пуҫланă. Хăйĕн ĕҫне тĕрлĕ енлĕ йĕркелесе пынă, класс тулашĕнчи ĕҫ валли те вăхăт тупнă.

Учитель ĕҫĕ урок ирттерессипе кăна ҫыхăнман, унтанпа вăл пилĕк класăн ертӳҫи пулнă. Халĕ унăн улттăмĕш выпускĕ 11-мĕш класра вĕренет. Класс ертӳҫи ачасене тĕрлĕ ĕҫпе кăсăклантарать. Екатерина Зиновьевна нихăҫан та йывăрлăхран хăраман, ума лартнă тĕллеве яланах пурнăҫлама тăрăшнă.



– Манăн педагогика ĕҫĕ ҫине эпĕ Галина Алексеевна Ермакова учительпе тĕл пулни пысăк витĕм кӳчĕ. Манăн наставник – пысăк сас паллиллĕ педагог, вăл яланах мана валли кирлĕ сăмахсем тупатчĕ, тĕрĕс ҫулпа утма вĕрентетчĕ. Хамăн предмета вĕрентессинче ҫĕнĕлĕхсем шырама, кашни вĕренекен чун-чĕри патне ҫул тупма сĕнетчĕ, – калаҫăва малалла тăсрĕ вăл.

Пултаруллă педагог Екатерина Зиновьевна 1998 – 2002 ҫулсенче вырăс чĕлхи урокĕн «Душеобразование через речеобразование» ҫĕнĕ пособин экспериментаторĕ пулнă. 2006 ҫулта «Русский язык на концентрической основе» кĕнеке пичетлесе кăларас ĕҫе активлă хутшăннă. Ҫĕнĕ кĕнеке кăларассине филологи наукисен докторĕ, Чăваш Республикин вĕренӳ ĕҫĕн тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ Галина Ермакова профессор ертсе пынă. Галина Алексеевна Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕнче ĕҫленĕ май Чăваш Енри вырăс чĕлхипе литература учителĕсем валли нумай ĕҫ тунă.

– Икĕ пинмĕш ҫулсен пуҫламăшĕнче, ЕГЭ тапхăрĕ пуҫланнă вăхăтра, текст тăрăх ачасене сочинени-рецензи ҫырма мĕнле вĕрентмеллине, хăнăхтарусене пурнăҫланă чухне мĕн ҫине тимлĕх уйăрмаллине пĕлсех каймасттăмăр. Ҫак ĕҫре эпир шăпах та Галина Алексеевнăран пулăшу ыйтрăмăр, унпа пĕрле пĕрремĕш утăмсем турăмăр.

Шкул ĕҫĕнче мана мăшăр Петр Николаевич Таймаскин чылай пулăшрĕ. Вăл Ильинка шкулĕнче 24 ҫул ĕҫлерĕ, физкультура урокне ертсе пычĕ. Мăшăр хатĕрленĕ стендсемпе пособисем, техника хатĕрĕсем мана ĕҫри ҫĕнĕлĕхсене вăя кĕртме май пачĕҫ, – кăмăллăн аса илчĕ мăшăрĕн пулăшăвĕ пирки Екатерина Зиновьевна.

Ĕҫне кура – хисепĕ. Таймаскинсен вĕренӳ ĕҫĕнчи тăрăшулăхне тĕрлĕ чыславпа хакланă. Вĕсенчен те пахараххи – вĕренекенсем хăйсен вĕрентекенĕсене ырăпа аса илни, ăшă сăмахпа тав туни.

Таймаскинсен ҫемйи пĕчĕкех мар, вĕсем икĕ ывăлпа пĕр хĕр ӳстернĕ. Наташа ятлă хĕрĕ ашшĕ-амăш ҫулне суйланă, шкултан вĕренсе тухсан И. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика университетĕнчи филологи факультетне вĕренме кĕнĕ.

Халĕ вара Таймаскинсен ăрăвĕн ĕҫне тăсакан учитель 12 ҫул ĕнтĕ вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. Вăл та ашшĕ-амăшĕ пекех тăрăшуллă вĕрентекен пуласси куҫкĕрет. Екатерина Зиновьевна, амăшĕ, педагог тата наставник, Наталья Петровна учитель ялавне ҫӳллĕ шайра тытса пырасса шанса тăрать.

Вăл Шатракасси шкулĕнче ĕҫленĕ вăхăтра 2018 – 2019 вĕренӳ ҫулĕнче «Учитель года» конкурсăн районти тапхăрне хутшăнса ҫĕнтерӳҫĕ пулнă, район чысне республикăра хӳтĕленĕ. Ҫавăн пекех вăл вĕренӳ ҫулĕнчи чи лайăх филолог тата асăннă конкурсăн финалисчĕ пулнă.

Пултаруллă вĕрентекен Наталья Петровна халĕ ачасене Шупашкар хулинчи 55 номерлĕ шкулта вĕрентет. Ĕҫтешĕсемпе вĕренекенсем хушшинчи авторитечĕ унăн пĕчĕк мар, хăйĕн ĕҫне тата ачасене питĕ юратать вăл.

Таймаскинсен ырă ĕҫĕ йăхран йăха куҫса пытăр.

**Роза ИЛЛАРИОНОВА.**

**Ятарлă çар операцийĕ**

# Чапай çапăçу хирĕнчен каялла васкаман



Ятарлă çар операцийĕнче малти ретри çар çыннисем паттăрлăх кăтартни пирки телепередачăсенче, Интернетра тăтăшах каласа параççĕ. Пирĕн чăваш каччисемпе арçынĕсем хăюлăхпа палăрнине илтсен вара пурте мăнаçланатпăр.

Тĕслĕхрен, танк взводĕн командирĕ Андрей Семенов пирки те каласа пама пулать. Пĕрле службăра тăракансем ăна Чапай тесе чĕнеççĕ. Вăл Красноармейски районĕнче 1998 çулта çуралнă. Призывпа çара кайса килнĕ хыççăн каччă Оборона министерствипе контракт çырса Раççей çарĕнче юлнă. Пĕлтĕрхи март уйăхĕнчен пуçласа вăл ятарлă çар операцийĕнчи çапăçусене хутшăнать.

Нумаях пулмасть ентеше – Андрей Семенов аслă сержанта Паттăрлăх орденне илме тăратнă.

Çуллахи çапăçусенчен пĕринче Чапая Макаровка салин кăнтăр енне çитме приказ параççĕ. Унта хирĕç тăракансен бронетранспорт ушкăнне тĕп тумалла пулать. Пĕрремĕш хут персех Чапайăн танк экипажĕ бронемашинăна сирпĕтет. Çакăн хыççăн тăшманăн иккĕмĕш бронемашини Макаровка салинчен тухса тарать. Вара Чапай Украина çарĕн Т-72 танкне хирĕç вирхĕнет, çав вăхăтрах пирĕн танкăн снаряд пемелли конструкци стройран тухать. Çапăçуран тухма приказ пулать, анчах хĕрсе кайнă экипажа, танка Чапай çапăçу хирĕнчен кăлармасть. Аслă сержант рота командирĕпе çыхăнăва тухса çапăçу вăхăтĕнчех çак конструкци кăлтăкне пĕтерме тытăнать. Ку ĕçе икĕ минутра пурнăçлама пултарать. Хыççăн тÿрех экипаж тăшманăн танкне тĕл лектерсе аркатать. Хыççăн та танк каялла таврăнма шутламасть. Артиллери снарячĕсем айĕнчех, пĕтĕм боекомплекта ăçта пемелле çавăнта персе пĕтернĕ хыççăн кăна хăй вырăнне таврăнать.

Шăпах çак паттăрла ĕçшĕн пирĕн ентеше Паттăрлăх орденне илме тăратнă. Чăннипех те паттăр та хăюллă, йывăр вăхăтра тĕрĕс йышăнусем тума пултаракан çирĕп кăмăллă ентешсемпе мăнаçланатпăр.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

**Шкулчченхи вĕренÿ учрежденийĕсенче**

# Ачасем тĕрĕс-тĕкел ÿсчĕр



Çултан-çул автотранспорт йышĕ ÿссех пырать. Шел пулин те, унпа пĕрлех – çулсем çинчи инкек-синкек хисепĕ те. Çавăнпа та çул çинчи хăрушсăрлăх уйрăмах çивĕч ыйту пулса тăрать.

Çакна шута илсе эпир, «Солнышко» ача садĕнчи воспитательсем, çул çинчи хăрушсăрлăх темипе тимлĕ ĕçлеме тăрăшатпăр. Çул çинче кĕтмен çĕртен инкек тухма пултарасса, çавна май яланах асăрханмаллине ачасене тăтăшах аса илтеретпĕр. Паллах, ачасене çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисемпе паллаштаратпăр, вĕсене асра тытма ыйтатпăр.

Ачасем харпăр хăйне çул çинче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессине тивĕçлĕ вырăн уйăрччăр тесе вĕсене çак темăпа çыхăннă республика тата Раççей шайĕнчи конкурссене те явăçтаратпăр.

«Радуга» аслă ушкăнри Кирилл Щукин тата Анна Кожевникова нумаях пулмасть «Манăн юлташ – светофор» республика конкурсне хутшăнчĕç. Вĕсем çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисемпе çыхăннă ÿкерчĕксем турĕç. Кирилл 1-мĕш, Аня 3-мĕш вырăн йышăнчĕç.

Виктория Любимовăпа Дмитрий Колбасов Чăваш Ен Транспорт министерстви ирттернĕ «Хăрушлăхсăр çулсем – ман валли тата манăн юлташсем валли» ÿкерчĕксен конкурсĕнче 2-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕç.

Екатерина Алексеева тата Кирилл Щукин пĕтĕм Раççейри «Хăрушсăрлăх çулĕ» ача-пăча пултарулăх конкурсĕнче те палăрчĕç, 1-мĕш вырăн йышăнчĕç.

Пирĕн ачасем çул-йĕр çинчи инкексенче сиен тÿснĕ ачасене пулăшакан Н. Едыкина ячĕллĕ ыр кăмăллăх фончĕн Раççей конкурсне те хутшăнчĕç. «Çуран çÿрекенĕн азбуки» конкурса эпир Екатерина Алексеева, Илья Волков тата Вероника Павлова пăхмасăр вуланă сăвăсене видео мелĕпе ярса патăмăр. Пирĕн ачасем пурте çĕнтерÿçĕсен йышне кĕме пултарчĕç.

Ачасен çитĕнĕвĕсем пире те, воспитательсене, савăнтараççĕ. Çапах та çитĕнÿ ашшĕ-амăшĕн пулăшăвĕсĕр пулмасть. Çавăнпа та эпир «Радуга» ушкăна çÿрекен ачасен ашшĕ-амăшĕсене тав сăмахĕ калатпăр.

Эпĕ ачасемпе çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисемпе паллаштарассипе ытларах ĕçленĕрен, ашшĕ-амăшĕсене те çак ыйту çине пысăк тимлĕх уйăрма ыйтатăп. Ачасем тĕрĕс-тĕкел ÿсчĕр.

**Татьяна НИКОЛАЕВА, воспитатель.**

**Сăн ÿкерчĕкре: Екатерина Алексеева, Илья Волков тата Вероника Павлова Татьяна Николаева воспитательпе пĕрле.**

**Саламлатпăр**

Хамăрăн юлташа, çар тивĕçне Совет çарĕсен Германири ушкăнĕнче 1973 – 1975 çулсенче чыслă пурнăçланă **Василий Гаврилович ВОЛКОВА** (Ильинка тăрăхĕнчи Ойкас ялĕ) çуралнă кунĕпе саламлатпăр. Ялан активлă пулма çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, кулленхи ĕçре ăнăçу, çемьере юратупа килĕшÿ сунатпăр.

**ГСВГ ветеранĕсен районти уйрăмĕ.**

Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, кукаçине, асаттене, пиччене, хĕтана – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Юрий Николаевич СКВОРЦОВА** сумлă юбилейпа, 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн



саламлатпăр. Тулăх пурнăç, çирĕп сывлăх, тĕнчере мĕнпур ыррине сунатпăр. Эсĕ пирĕншĕн – чи хаклă, чи юратнă, ылтăнран та хаклă çын. Çывăх çынсен ăшшине туйса, тус-тăван хисепне курса, тăван кил ăшшине упраса нумай çул пурăнма вăй-хăват пултăр. Турри сана тата нумай çул упратăр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, шăллĕсемпе йăмăкĕсем çемйисемпе, хăти-тăхлачисем, мĕнпур тăванĕ.**

Хисеплĕ те хаклă аннене, юратнă асаннене – Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнчи Шупуç ялĕнче пурăнакан **Раиса Тимофеевна ИВАНОВĂНА** 90 çулхи юбилейпа чун-чĕререн тухакан чи ырă та ăшă сăмахсемпе



саламлатпăр. Çирĕпрен те çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Мĕн шутланисем пурнăçланса пыччăр. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумай çул усратăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем, кÿршисем.**

Юратнă мăшăра, хисеплĕ аттене, кăмăллă асаттене, кукаçа – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Анатолий Витальевич НИКОЛАЕВА** октябрĕн 25-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа



саламлатпăр. Çирĕп сывлăхпа вăрăм кун-çул, тулăх пурнăç, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Çывăх çынсен ăшшине туйса, тус-тăван хисепне курса нумай çул пурăнмалла пултăр. Яланах хаваслă пурăн. Эпир сана пурте юрататпăр.

**Чунтан юратса: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем.**

**Социаллă хÿтлĕх**

# 1781 çын усă курать

Федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансене хальхи вăхăтра пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тÿлеме кайнă расхутсене саплаштарма пăхнă. Асăннă пулăшу мелĕпе округри 1781 çын усă курать. Ку категорие вăрçă инваличĕсем, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕсем, çар операцийĕсен ветеранĕсем, чирлесе инвалида тухнисем тата ыттисем кĕреççĕ. Кун пеккисен пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тÿлеме кайнă расхутсен 50 процентне саплаштараççĕ.

Компенсаципе уйăхсерен тивĕçтерме пăхнă. Федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракана ăна хăй пурăнакан вырăнти пĕр çурт-йĕршĕн параççĕ.

Енчен те çурт-йĕрте асăннă пулăшу мелне тивĕçлĕ икĕ е ытларах гражданин пурăнать пулсан, пулăшу кашнин валлиех пулать, компенсаци суммине вĕсене пайласа параççĕ.

Муркаш округĕнче октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тÿлеме кайнă расхутсене федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракан 1781 çынна компенсаци парса саплаштарнă. Унăн сумми 7 млн та 388 пин тенкĕ.

**Социаллă хÿтлĕх пайĕ.**

**Автомобиль тата хула пассажир транспорт ĕçченĕн кунĕ**

# «Пирĕн тимлĕхе нихăçан та çухатмалла мар»



Пурнăç хăвăрт аталанса пынă май унăн хăвăртлăхĕ те ÿсет: паян эпир пысăк автотрассăсем çинче кăна мар, ял-хула урамĕсенче те кунĕн-çĕрĕн тенĕ пекех автотранспорт çÿренине хăнăхнă, çынсем те халĕ пĕр вырăнтан теприне хăвăрт «кусса çÿреççĕ». Апла пулсан водительсен ответлăхĕ те пысăк пулмалла. Çакна хулапа яла çыхăнтаракан çулсем çинче кашни кун çула тухакан водительсен питĕ лайăх ăнланаççĕ.

Эсир **сăн ÿкерчĕкре** куракан Алексей Васкинов тата Владимир Федькин чылай çул çак ĕçре тимлеççĕ.

«Тĕрлĕ автомобиль, автобус, маршрутка – мĕнле кăна транспорт çÿремест пулĕ çул çинче. Эпир хамăрăн пассажирсен, çул çинчи ытти çуран çÿрекенĕн пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн ответлă пулса тăратпăр. Çакна питĕ лайăх ăнланатпăр. Пĕлетпĕр – пирĕн тимлĕхе нихăçан та çухатмалла мар, хамăр çÿрекен транспорта тĕрĕс-тĕкел тытса тăмалла, кашни кăлтăка вăхăтра асăрхамалла, юсамалла. Пассажирсене турттарасси чăнах та питĕ ответлă ĕç. Муркаш тăрăхĕнче çак ĕçе пурнăçлакан водитель сахал мар, эпир вĕсене пурне те çитес уявпа, халăхра каланă пек, Водитель кунĕпе саламлатпăр», – терĕç 20 çул ытла пассажирсене турттаракан водительсем.

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Сывлăх

# Çумăрта Д витамин çимелле



**Наталья Тананакина эндокринолог** çумăрлă çанталăкра Д витамин çиме сĕнет. Çакă иммунитета çирĕплетме май парать. Вăл палăртнă тăрăх, асăннă препарата йышăнни фосфор тата кальци йышăннассине лайăхлатать. Вĕсем çитменни вара чĕрепе юн тымарĕсен патологийĕ, онкологи, остеопороз тата рахит аталанма пуçăнасси патне илсе çитерме пултарать.

«Çумăрлă та ăмăр çанталăк тăрать пулсан, Д витамина дозăпа йышăнас пулать. Асăннă ушкăн витаминĕсем организма фосфор тата кальци йышăнма кирлĕ. Вĕсем çитменни сывлăх тĕлĕшпе тĕрлĕ пăтăрмах кăларса тăратма та пултарать», – тесе асăннă эксперт.

Врач каланă тăрăх, асăннă витамин комплексĕсене йышăнассине специалист юнăн биохими анализĕн даннăйĕсене тĕпе хурса палăртать. Чикĕлевсем те пулма пултараççĕ. Д витамин тĕрлĕ формăлли пулать: капсулăра та, чăмламалли таблетка та. Врач кирлĕ варианта пациент организмĕн уйрăмлăхĕсене шута илсе суйласа илет.

Д витамин запасне пуянлатас тесен, эсир хăвăрăн рациона сĕт продукчĕсем, кăмпа, çуллă пулă, çăмарта сарри, пĕвер кĕртме пултаратăр. Врач асăрхаттарнă тăрăх, организмра витаминсем çитменнине палăртакан симптомсем шутĕнче: шăмăсем тата мышцăсем ыратни, çÿç тăканни, ÿт типĕ пулни, чĕрне вакланни, мышцăсен тонусĕ хавшакланни.

# 50 çул хыççăн инсульт ан пултăр тесен

Çĕр чăмăрĕ çинчи çитĕнсе çитнĕ çынсен вилессин сăлтавĕсем хушшинче инсульт виççĕмĕш вырăн йышăнать. **Ринат Акбаров невролог врач** 50 çул урлă каçнă хыççăн инсульт ан пултăр тесен мĕнле правилăсене пăхăнмалли пирки каласа панă.

Ялан тенĕ пекех, 50 çул урлă каçнă хыççăн çыннăн юн тымарĕсенче ÿсĕмпе çыхăннă улшăнусем пулса иртме тытăнаççĕ – юн тымарĕсен стенкисен пиçĕлĕхĕ чакать.

Стресс пысăк чухне тата ытлашши вăйхал активлăхĕ пулсан юн тымарĕн стенки артери юн пусăмĕ ÿссе кайнине чăтаймасан та пултарать. Ку вара чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсем аталанассипе çыхăннă.

Пулма пултаракан патологисене асăрхаттарас тесен, уйрăм профилактика мероприятийĕсене пурнăçлас пулать. Сăмахран, пирус пачах туртмалла мар тата алкоголь ĕçмелле мар.

Çавăн пекех сывă пурнăç йĕркине тытса пымалла тата тĕрĕс апатланмалла – çуллă çимĕç çимелле мар, пылак, çăнăхран пеçернĕ çимĕç çиессине чакармалла, юнри сахăр тата холестерин шайне виçепе тытмалла.

Ватă çынсен стрессенчен асăрханас пулать тата вăй-хал активлăхĕ пирки манмалла мар. Кунсăр пуçне çителĕклĕ çывăрни пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен ыйхă нерв системине йĕркене кĕртмелли чи лайăх мелсенчен пĕри пулса тăрать.

Чĕре мышцине çирĕплетмелли ансат упражнени пур: сулахай алăпа алăк хăлăпĕнчен тытмалла та туртăнса кăкăр клеткине сармалла.

# Хăрушă чире вăхăтра асăрхама май пур

«Сывлăх» наци проекчĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пайĕсенчен пĕри – çынсем тăтăшах тÿлевсĕр тĕрĕслев – диспансеризаци тухма пултарни, çавна май чирсене вăхăтра асăрхаса вĕсене сиплеме тытăнма май пурри.

Профилактика медицина тĕрĕслевĕ тата диспансеризацин пĕрремĕш тапхăрĕнче 40 – 74 çулсенчи хĕрарăмсен икĕ çулта пĕрре сĕт парĕн маммографине туса ирттермелле.

Маммографи сĕт парĕ таврашĕнчи шыçă чирĕсене малтанхи тапхăртах, чир паллисем тата кăкăрта хытăрах вырăнсем палăрма пуçличчен тупса палăртма пулăшать. Çакă вара сĕт парĕн усал шыççине вăхăтра тата эффективлă сиплеме май парать.

Маммографи тăмалли кăтартусем çаксем шутланаççĕ: хĕрарăм 40 çултан иртни, йăхра çак чирпе чирленисем пурри, кăкăр форми улшăнни тата вĕсенчен шĕвек тухни, кăкăр çинчи ÿт хĕрлĕрех пулни, «апельсин хуппи» пулма тытăнни, сĕт парĕ выраннăн-вырăннăн мăкăрăлса тăни е шаларах путни, кăкăр туртăнса тăни тата ыратни, пар тĕртĕмĕсенче хытă вырăнсен пурри.

Маммографи тĕрĕслевĕ май пур таран тĕрĕсрех пултăр тесен, хĕрарăмсен ăна менструаци циклĕн пĕрремĕш çуррине туса ирттерме тăрăшмалла. Тĕрĕслевчен супăньсăр е гельсĕр çăвăнмалла, хул хушшине дезодорант сĕрмелле мар, çавăн пекех кăкăр валли туса кăларнă косметика хатĕрĕсемпе те усă курмалла мар.

Маммографи тĕрĕслевне ача кĕтекен хĕрарăмсен, ачана кăкăр ĕмĕртекен хĕрарăмсен туса ирттермелле мар. Çавăн пекех кăкăра имплант вырнаçтарнисен, искуствăлла майпа ача пăрахнă хыççăн ултă уйăх иртменнисен те çак тĕрĕслеве туса ирттерме хирĕçлев пур. Маммографи тĕрĕслевĕчен компьютер томографине тунăранпа 12 уйăх иртменнисен те ку тĕрĕслеве тумалла мар.

Маммографпа шыçă пулма пултарнине палăртнă хыççăн врач хĕрарăма ытти тĕрĕслеве явăçтарма направлени парать.

Диспансеризаци тĕрĕслевне туса ирттерессине Муркаш район тĕп больницин стационар корпусĕнчи 119 кабинетра е участок терапевчĕ патĕнчен тытăнмалла. Çавăн пекех пĕтĕмĕшле практика врачĕ е выранти фельдшер патне те кайма юрать.

**Наталья ИСАЕВА,**
**медицина профилактикин врачĕ.**

# Грипп тата ОРВИ

ОРВИ – респираторлă тракчĕн инфекцийĕ. Вăл çÿлти сывлав çулĕсен катарлă шыççипе палăрать. Çыннăн сивчир, сунас, ÿслĕк, пыр ыратни пулма пултарать, пĕтĕмĕшле кăмăл-туйăм пăсăлать.

Çивĕч респираторлă инфекци тесе çак нозологи формисене палăртаççĕ: çивĕч назофарингит, çивĕч фарингит, çивĕч ларингит, çивĕч трахеит, çивĕч ларингофарингит, çÿлти сывлав çулĕсен çирĕплетмен çивĕч инфекцийĕ.

Грипп – çивĕч вирус инфекцийĕ, çивĕччĕн пуçланать, сивчир (температура 38 градусран та ÿссе кайма пултарать), пĕтĕмĕшле интоксикаци пулма пултарать, сывлав çулĕсем сиенленеççĕ.

ОРВИ тата грипп сывлăшпа пĕрчĕ мелĕпе сарăлаççĕ, чирлĕ çын сывланă, калаçнă, ÿсĕрнĕ чухне ереççĕ.

Кунсăр пуçне ОРВИ тата грипп харпăр хăйĕн гигиени правилисене пăхăнман чухне чирлĕ çынран йăлара та ерме пултараççĕ.

**ОРВИ-пе тата гриппа чирлесен мĕн тумалла?**

Пĕлтерĕшлĕ!!!

Пĕрремĕш симптомсем пулсанах, килте юлмалла, тухтăра киле чĕнмелле. Харпăр хăй тĕллĕн сиплеме юрамасть, чире «ура çинче» ирттермелле мар. Унсăрăн чир шала кайма та пултарать. Йывăр патологисем пулма пултараççĕ.

Епле пулсан та чирлĕ ачана шкула, ача садне ямалла мар. Тухтăрăн сĕнĕвĕсене çирĕп пурнăçламалла.

**Килте чирлĕ çынна мĕнле пăхмалла?**

1. Чирлекен валли уйрăм пÿлĕм уйăрмалла. Тăвансемпе хутшăнассине чакармалла.

2. Чирлĕ çыннăн харпăр хăйĕн гигиенин хатĕрĕсем тата чашăк-тирĕк уйрăм пулмалла.

3. Чирлĕ çын пÿлĕмĕнче пулнă чухне маска тăхăнмалла.

4. Чирлĕ çынпа хутшăннă хыççăн харпăр хăйĕн гигиенине пăхăнмалла.

5. Пÿлĕме уçăлтармалла.

6. Дезинфекци хатĕрĕсемпе усă курса пÿлĕме нÿрĕлле тасатса тирпейлесе тăмалла.

**Харпăр хăйне грипран мĕнле сыхламалла?**

Паянхи куна грипп профилактикин чи эффективлă мелĕ вăл – вакцинаци. Шăпах вакцинаци чирлекенсен тата ăна пула вилекенсен шутне чакарма май парать. Ятарлă иммунитет вакцинаци тунă хыççăн 2 эрне аталанать, 12 уйăх таран тăсăлать. Çавна май прививкăна кашни çулах тума сĕнеççĕ, анчах та эпидеми сезонĕ пуçаниччен пĕр уйăхран кая юлмасăр. Çынсен çулленхи иммунизацийĕ грипп вирусĕ питĕ улшăнса тăнипе çыхăннă. Унсăрăн çыннăн организмĕ вирусăн тĕрлĕрен генетика тĕсĕсем валли иммунитет илсе çитереймест.

Прививка умĕн респираторлă чирпе чирлекенпе хутшăнмалла мар, шăнмалла мар. Прививкăна выранти медицина организацийĕнче, шкулсенче тата ача сачĕсенче ятарлă медицина кабинечĕсенче тутармалла.

Раççей Федерацийĕн территорийĕнче хальхи вăхăтра хамăр çĕршывра туса кăларнă «Совигрипп», «Гриппол-плюс», «Флю-М», «Ультрикс Квадри» вакцинăсемпе усă кураççĕ.

Вакцинацие «пысăк хăрушлăх» ушкăнне кĕрекен çынсене тăваççĕ:

1. 60 çул урлă каçнă çынсем;

2. Эндокрин системин чирĕсемпе (диабет), япаласен ылмашăвĕ пăсăлнипе (самăрланассипе çыхăннă), юн çаврăнăшĕн системин чирĕсемпе (гипертони, чĕрен ишеми чирĕ), сывлав системин вăраха кайнă чирĕсемпе (вăраха кайнă бронхит, бронх астми), пĕверĕн тата пÿрен вăраха кайнă чирĕсемпе аптăракансем;

3. Çие юлнă хĕрарăмсем (инактивлă вакцинăсемпе кăна);

4. Çивĕч респираторлă вирус чирĕсемпе тăтăшах чирлекенсем;

5. 6 уйăхран аслăрах ачасем, шкул çулне çитменнисен вĕренÿ организацийĕсене çÿрекенсем;

6. Шкул ачисем;

7. Медицина ĕçченĕсем;

8. Çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерекен сферăра, транспортра, вĕренÿ заведенийĕсенче ĕçлекенсем;

9. Çар контингенчĕ.

Грипа асăрхаттарассипе ятарлă мар санитарипе гигиена нормисен шутне çаксем кĕреççĕ:

– пÿлĕмре температура режимĕ хăтлă пулни;

– пÿлĕме тăтăшах уçăлтарни;

– дезинфекци хатĕрĕсемпе усă курса пÿлĕмсене кашни кун нÿрĕлле тасатса тирпейлени;

– ытлашши шăнни иммунитета чакарать, çавăнпа çанталăка кура тумланас пулать.

Кунсăр пуçне ОРВИ тата грипп профилактики тĕлĕшпе организма пĕтĕмĕшле сывă тума пулăшни тата унăн хÿтлĕх вăйне ÿстерни пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать:

– çынсем йышлă пухăнакан вырăнсенче пулнă чухне пĕр хут усă курмалли маска тăхăнмалла, маскăна кашни 2 – 3 сехет урлă çĕннипе улăштармалла;

– харпăр хăйĕн гигиенине çирĕп пăхăнмалла;

– С витамин, фитонцидсем пур пахча çимĕç тата улма-çырла ытларах çиме тăрăшăр (лимон, апельсин, клюква, ыхра, сухан т. ыт. те);

– сывă пурнăç йĕркине тытса пырăр, вăл шутра ыйхă йĕркеллĕ пултăр, вăй-хал активлăхĕ пирки ан манăр, организма пиçĕхтерĕр;

– сиенлĕ йăласенчен хăтăлăр.

**Е. КАШТАНОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн эпидемиологи надзорĕпе тивĕçтерекен пайăн эпидемиолог врачĕ.**

# Остеопорозран асăрханма

Остеопороз – шăмăсен анлă сарăлнă чирĕ. Çак чирпе аптăракансен кальци организмран çийĕнсе тухать. Çавна май шăмăсен патрак пулса каяççĕ, çын хытах мар ÿксен те шăмă хуçălма е çурălма пултарать. Чи хăрушши – пĕçĕ шăмми хуçăлни. Кун пек чухне çын вилме те пултарать. Çуллен 300 пин çын таран остеопороза пула пĕçĕ шăмми хуçăлнипе аптăрать. Ку чире «чĕмсĕр чир» тесе те калаççĕ. Мĕншĕн тесен вăл темиçе çул хушши ерипен аталанать, нумай чухне нимĕнле улшăну е симптом та палăрмасть.

Остеопороз аталанма пултарасси çын 35 çул тĕлне шăмă тĕртĕмĕ мĕн чухлĕ пухма пултарнинчен килет. Сывă организмра шăмă тĕртĕмĕ вĕçĕм çĕнелсе тăрать. Ачалăх çулĕсенче шăмă масси ÿссе пырать, 25 çул тĕлне чи пысăкки пулать. 35 çула çитиччен кальци скелетра вăйлăн пухăнать. 35 – 45 çулсенче шăмă масси пĕр пек пулать. Каярахпа вара кальци шăмăран çийĕнсе тухма тытăнать. Çавăнпа та 35 çул тĕлне шăмăсем мĕн чухлĕ çирĕпрех те хытăрах, остеопорозпа чирлеме пултарасси çавăн чухлĕ сахалрах.

Енчен те вара ачалăх тата çамрăклăх çулĕсенче организм вĕçĕмех кильци кирлĕ чухлĕ илсе çитереймен пулсан, остеопорозпа чирлеме пултарасси самай ÿсет. Ача чухне тата çамрăклăх çулĕсенче тăтăшах шăмă хуçăлнă тĕслĕхсем пулни те организмра кальци çитменни пирки калама пултараççĕ.

Хĕрарăмсен климакс пулас умĕн юнри ар гормонĕсен шайĕ тăрук чакса каять. Çакна пула кальци çийĕнсе тухасси 2 – 4 хут ÿсет. Çавна пулах ĕнтĕ, арçынсемпе танлаштарсан, 50 çул урлă каçнисен хушшинче хĕрарăмсен остеопороз 3 хут ытларах тĕл пулать.

Остеопороз аталанма пултарассине ÿстерекен факторсем шутне çавăн пекех çаксем кĕреççĕ:

– шăмăсем патрак пулни еткерлĕхпе çыхăнни;

– улăшу тапхăрĕ (менопауза) вăхăтран маларах пулни, хĕрарăмсен ар органĕсене касса кăларни те остеопороз пулма пултарассине ÿстерет;

– 3 уйăх ытла глюкокортикоидсем çини;

– кальципе пуян çимĕç сахал çини (йÿçĕтнĕ сĕт продукчĕсем, çуллă мар тăпăрчă, сыр т. ыт. те), Д витамин йышăнманни;

– кусăмсăр пурнăç йĕркипе пурăнни, кунпа пĕрлех медицина кăтартăвĕсене кура выртса пурăнни;

– пирус туртни, алкоголь тата кофе ĕçни те организмран кальци кăлараççĕ.

Остеопорозран асăрханассин правилисем ансат, çакă ача çулĕсенченех пуçăнмалла. Рациона кальципе тата Д витаминпа пуян çимĕçсем кĕртмелле, йывăр мар вăй-хал активлăхĕ пулмалла, усă сывлăшра час-часах пулма тăрăшмалла. Çапла майпа организм Д витамин кирлĕ чухлĕ илме пултартăр. Кунпа пĕрлех пирус туртманни тата эрехпе ашкăнманни те шăмăсене сывă сыхласа хăварма пулăшĕç.

**Елена ЕГОРОВА,**
**общество сывлăхĕпе медицина профилактикин, сиплев физкультурипе спорт медицинин республика центрĕн медицина профилактикин врачĕ.**

Сĕнӳ-канаш

# Пахалăхлă иçĕм çырли мĕнле суйламалла?

Пирĕн несĕлсем сахăр туса кăларма тытăниччен чылай малтанах тутлă иçĕм çырли çисе киленнĕ. Экватор çывăхĕнчи шăрăх та хĕвеллĕ çĕршывсенче пин çул каяллах типĕтнĕ виноград мĕнле тутлă та усăллă пулни пирки пĕлнĕ. Вăхăт иртнĕ май типĕтнĕ çак çырла пĕтĕм тĕнчипех анлă сарăлнă. Халĕ ăна пур çĕре те хушаççĕ: напитоксене, аш блюдисене, салатсене тата çăкăр-булкăна.

Иçĕм уссипе унăн тути ăна мĕнле типĕтнипе, хатĕрленипе тата усранипе тӳрремĕнех çыхăннă. Çак çимĕçе эсир тĕрĕс суйлама пĕлетĕр пулсан, хăвăршăн усăллине чылай илме пултаратăр. Унра кали (çимĕçĕн 100 грамĕнче 21 процент таран), пăхăр (16 процент), клетчатка, марганец, фосфор тата В6 витамин пур. Кунне пĕр ывăç иçĕм çырли çини кислотапа сĕлтĕ (щелочь) балансне йĕркеллĕ тăвать, иммунитета тата шăмăсене çирĕплетет, сиенлĕ холестерин шайне чакарать тата япаласен ылмашăвне лайăхлатать. Кун пек иçĕме мĕнле тупмалла-ха?

Ĕçĕ пĕтĕмпех ăна хатĕрлессин технологийĕнче. Типĕтнĕ хыççăн кирек мĕнле виноград та тĕксĕмленет. Çутă тата тĕксĕмрех сортсем те пĕр пекех. Иçĕме ылтăн тĕслĕ хитре тăвас тесе ăна хатĕрлекенсем кӳкĕртлĕ ангидридпа усă кураççĕ. Чăн-чăн иçĕм тĕксĕм карамель, çавăн пекех тĕксĕм кăвак тата хура тĕслĕ кăна пулма пултарать. Виноградăн тĕксĕм сорчĕсенче усăллă япаласем ытларах пулаççĕ.

Кĕрен тĕслĕ сортсенчен хатĕрлекен хĕрлĕ иçĕм питĕ сайра тĕл пулать. Хăйĕн пахалăх енĕсемпе вăл çутă тĕслинчен усăллăрах. Апла пулин те «шагани» (хĕвел çинче типĕтсе хатĕрлеççĕ), «авлон» (вăррипе пĕрле типĕтеççĕ) йышши тĕксĕм сортсене çитеймест. «Гермиан» сортлине вара, виноградăн элита сортĕнчен пулин те, сĕлтĕпе усă курса хатĕрлеççĕ.

Иçĕме тутине кура кăна мар, çавăн пекех хыпашласа е итлесе пăхса та тĕрĕслеме пулать. Акă чăннипех те лайăх иçĕмĕн пахалăх кăтартăвĕсем.

* Хыпашласа пăхсан вăл пиçĕ пулмалла – ытлашши çемçешке те, хытă та мар.

* Çырла çинче сиенленнĕ вырăнсем пулмалла мар, хӳрешки пулсан лайăхрах. Хӳрешки пур пулсан, винограда механика мелĕпе хатĕрлемен, унра усăллă япаласем ытларах.

* Тытса тата хыпашласа пăхма çимĕç сире тивĕçтерет пулсан, çырлана çӳлелле ывăтса пăхăр: вăл ӳксен кăштах сасă тухрĕ тата ӳкнĕ çĕртех юлчĕ пулсан, туянма юрать. Енчен те вара сасăсăрах ӳкрĕ тата сиксе кайрĕ пулсан, ку çырла питĕлĕхĕпе тĕрĕслев тухаймарĕ.

* Тути енĕпе иçĕм тĕрлĕрен пулма пултарать. Анчах та мĕн пулмалла марри – тĕтĕм тата хими япалин тути.

* Виноградăн типĕтнĕ çырли тĕксĕм пулать, çырласем пĕр-пĕринпе çыпăçмаççĕ.

* Юлашкинчен тата тепĕр сĕнӳ: типĕтнĕ çырлана ывăç тупанĕ çине хурса пӳрнесемпе сăтăрса пăхăр. Çапла эсир шалта паразитсем – улма-ырла кĕви пуррипе çуккине пĕлме пултаратăр.



Çапла вара эсир чи лайăх иçĕм суйласа илтĕр тейĕпĕр. Анчах та асра тытăр, ăна мĕнпе усă курса тата епле майпа хатĕрленине малтанах ниепле те татса калама май çук. Усă куриччен иçĕме ăшă шывра 30 – 40 минутлăха ислетĕр. Çакă çырлана сульфит тата каустик юлашкийĕсенчен (хăвăртрах пиçсе çитме усă кураççĕ) тата тусанран тасатма пулăшĕ. Иçĕме салата хушас тетĕр пулсан, ислетнĕ çырла лайăхрах пулĕ кăна. Сире типĕ çимĕç кирлĕ пулсан вара ăна дуршлаг витĕр сăрăхтарăр та типме хут алшăлли çине хурăр.

Иçĕм пĕсернĕ çимĕçе питĕ лайăх кăштах йӳçек тутлă тăвĕ, пахча çимĕç ассортине вара пылак тутă кӳрĕ. Иçĕмĕн усăллă енĕсенчен пĕри вăл – çырла питĕ тутлăхлă пулни. Унăн калорилĕхĕ пысăк (100 грамм çимĕçре 300 килокалори таран). Анчах та ăна организм лайăх йышăнать. Çавăнпа та спортсменсем тата сывă пурнăç йĕрки тытса пурăнакансем унпа çырткаласа илнĕ чухне усă кураççĕ.

Тата çавна каласа хăварсшăн. Енчен те сире вăрăсăр иçĕм кирлĕ пулсан, кишмишран хатĕрленине шырăр. Ку вăл – вăрăсăр сорт. Вăл вĕтĕрех, карамель тĕслĕрех пулать.

**А. ПАВЛОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн санитарипе гигиена лабораторийĕн эксперт химикĕ.**

# Кăшман. Мĕнпе усăллă? Камшăн сиенлĕ?

Кăшман ытти нумай тымар çимĕçпе пахча çимĕçрен бетаин пуррипе уйрăлса тăрать. Ку хăватлă антиоксидант клеткăсем сиенленессипе кĕрешет, чĕре чирĕсем пулассине асăрхаттарать.

Кăшман клетчаткăпа, калипе, С витаминпа, тимĕрпе тата фоли кислотипе пуян. Асăннă япаласем юн пусăмне виçеллĕ тума пулăшаççĕ, шыçăсене чакараççĕ тата сывлăха пĕтĕмĕшле лайăхлатаççĕ. Кăшманпа кирек кам та усă курма пултарать, ăна усрама тата унпа усă курма ансат. Кăшмана рациона кĕртме кăткăс мар, унпа кашни кун та усă курма пулать. Анчах та пурин те мар. Халĕ вара кăшман мĕнпе усăллине тата ăна камсен хăйсен рационне асăрханса кĕртмеллине тĕплĕнрех тишкерер.

**Мĕн-ха вăл кăшман?**

Амарантлисен ушкăнне кĕрекен пысăк тымар çимĕç. Вăл çарăка е редиса аса илтерет, апла пулин те ботаника енĕпе вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнман. Кăшманăн тĕрлĕ сорчĕ пулать, вăл шутра вылăх апачĕн ӳстерекеннисем тата ирĕкре çитĕнекеннисем те. Кулинарире анлă сарăлни вара – рубин пек хĕрлĕ тĕслли. Ăна ӳстерме ансат, паян унпа пĕтĕм тĕнчипех усă кураççĕ.

Кăшманăн пур пайĕ те – тымарĕнчен пуçласа çулçи таранах – çиме юрăхлă. Çулçине уйрăмах грексем, римлянсем тата египтянсем пысăка хурса хакланă. Кăшман тымарне пĕçерсе, шаритлесе, çавăн пекех чĕрĕлле те çиеççĕ. Уйрăммăн та, кунпа пĕрлех пахча çимĕçпе е какайпа та çиме пулать. Çавăн пекех унпа сĕткенсем хатĕрленĕ чухне тĕс кăларма та усă кураççĕ.

Кăшманăн апат-çимĕç хаклăхĕ тата калорилĕхĕ.

Кăшман – пĕчĕк калорилллĕ çимĕç. Вăтам шутпа 90 процент вăл шывран тăрать.

100 грамм чĕрĕ кăшманра çаксем пур:
– килокалори: 43;
– белок: 1,6 грамм;
– çусем: 0,17 грамм;
– углевод: 9,56 грамм;
– клетчатка: 2,8 грамм;
– кальци: 16 миллиграмм;
– тимĕр: 0,8 миллиграмм.

Кунсăр пуçне кăшманра пĕлтерĕшлĕ çак япаласем пур:

***Бетаин.*** Янкăр хĕрлĕ тĕслĕ пулни шăпах çавăнпа çыхăннă. Çак ӳсен-тăран пигменчĕ антиоксидантлă тата шыçăпа кĕрешессин енĕсемпе палăрса тăрать. Çавăн пекех вăл юн тымарĕсен чирĕсем аталанассин хăрушлăхне чакарать, ĕçлеслĕхе ӳстерет.

***Фолат, кали, магни тата С витамин.*** Фоли кислоти организм клеткисен тĕп функцийĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Кали шĕвек шайне кирлĕ шайра тытса тăма пулăшать, магни шăмăпа чĕре сывлăхĕшĕн яваплă пулса тăрать, С витамин вара иммун системине хавшама памасть.

***Йод*** шайĕпе кăшман лидер пулса тăрать. Йод çитменнисемшĕн вăл пĕлтерĕшлĕ. Унра лимон, кăшкар ути, пан улми, хĕрлĕ эрех тата органика кислотисем пур. Вăлах клетчаткăпа, вăл шутрах пектинпа пуян. Çакă пыршăлăхăн микробиоти çине лайăх витĕм кӳрет.

**Кăшман сывлăхшăн усăллă: 5 факт.**

***1. Юн пусăмне чакарать***

Кăшманра диета нитрачĕсем пур. Вĕсем организмра азот оксидне куçаççĕ. Вăл юн тымарĕсене писĕлентерет тата сарма пулăшать. Çапла вара юн пусăмĕ те, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕ пулма пултарасси те чакаççĕ. Пĕр тĕпчев кăтартса панă тăрăх, тăватă эрне кашни кун 250 миллилитр кăшман сĕткенĕ ĕçсе пурăнни гипертонипе аптăракан пациентăн артери юн пусăмне чакарма пултарнă. Ытти тĕпчевсем вара кăшмана миокард инфаркчĕ пулма пултарассисене асăрхаттарнипе çыхăнтараççĕ.

***2. Пыршăлăх ĕçне лайăхлатать***

Кăшманра клетчатка тата шыв нумай пулни апат ирĕлтерекен система ĕçне пулăшать, япăх тийăмсенчен хăтарать, вар хытнине иртерет. Апат-çимĕç чĕлхĕмĕсем пуррипе тата калори пысăк пулманнипе кăшмана йывăрăша чакармалли диетăна кĕртме пулать. Тĕпчевсем çирĕплетнĕ тăрăх, клетчатка çимĕçе лайăхрах ирĕлме пулăшать кăна мар, çавăн пекех выçăлăх туйăмне ӳстерекен гормонсем туса кăларассине те чакарать.

***3. Тӳсĕмлĕхе ӳстерет***

Кăшман сĕткенĕ ĕçни тӳсĕмлĕхе ӳстерет тата спортри çитĕнӳсене лайăхлатать. Çакна тĕпчевсем çирĕплетеççĕ. Ученăйсен шухăшĕпе çакă нитратсемпе çыхăннă. Акă пĕр тĕпчев кăтартса панă тăрăх, тăтăшах кăшман сĕткенĕ ĕçсе пурăнакан арçынсен, ку сĕткене ĕçменнисен ушкăнĕпе танлаштарсан, велотренажер енĕпе хăйсен кăтартăвĕсене лайăхлатма пултарнă. Кăшлакан чĕр чунсем çинче ирттернĕ тĕпчевсем вара çимĕçе кăшман сĕткенĕ хушни ура тупанĕ патне юн пырса тăрассине ӳстернине палăртнă.

***4. Шыçăпа кĕрешет***

Кăшман – клеткăсене ирĕклĕ радикалсенчен сыхлакан антиоксидант çыхăнăвĕсен пуян çăл куçĕ. Бетаин пурри çакăнта пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнать. Вăл пĕвер сиенленессине чарать е вăйсăрлатать, пыршăлăх пĕрлĕхне тата çусен тĕртĕмĕн функцине сыхласа хăварать. Шăшисем çинче ирттернĕ тĕпчевсем çавна çирĕплетнĕ: 28 кун хушши кăшман сĕткенĕ хушса пани липидсем, белоксем окисленессине тата ДНК сиенленессине чакарма май панă.

***5. Миме ĕçне лайăхлатать***

